Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ДЕКАБĔР 20 ЫТЛАРИКУН 290 (5103) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Герой тупăкĕ умĕнче

Декабĕрĕн 16—17-мĕшĕсĕнче столицăри ĕçсыннисем халăх геройне, епĕр пурăнакан вăхăтри аслă ђотчика Валерий Павлăвич Чкалăва йулашки хут курса, унтан ĕмĕрлĕхе уйăрăлнă.

Мухтавлă ђотчикăн ӳчĕ выртакен тупăка лартнă Сойузсен çурчĕн колоннăй залне çынсем вĕçĕ-хĕррисĕр пырса тăнă.

Çынсем Сойузсен çурчĕн алăкĕсенчен кĕрсе тăнă, çĕнĕ те çĕнĕ чечек çыххисем илсе пынă. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ хĕрлĕ тата шурă чечексен çыххине хунă, вăл чечексен çыххине хуни совет çамрăкĕсем Чкалăва йуратса тăнине, Сталин вĕрентсе çитĕнтерекен çамрăксен ăрăвĕ Чкалăв пекех хăйулă тата мухтавлă пулма чаплă сăмах панине пĕлтернĕ.

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче, 14 сехет те 05 минутра Чкалăв ӳчĕ выртакан тупăк умне И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, М. И. Калинин йулташсем пынă. Партипе правителствă руководителĕсем епĕр пурăнакан вăхăтри аслă ђотчика, социалисăмлă тăван çĕршывăн мухтавлă гражданинне, бођшевиксен партин шанчăклă ывăлне йулашки хут курса, унтан ĕмĕрлĕхе уйăрălнă.

Пилĕк минут иртет. Тупăк умĕнче хисеплĕ хурала çĕнĕ çынсем тăнă. Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв тата Калинин йулташсем зала йулса совет халăхĕ пăхса ӳстернĕ, бођшевиксен партийĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ çав тери чаплă ђотчикăн хăйулă пичĕ çине пăхса тăнă.

Çак кунсенче колоннăй залра 350 пин çын пулса Валерий Павлăвич Чкалăв ӳчĕ выртакан тупăк умĕнчен иртнĕ.

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче çĕрле Совет Сойузĕн Геройĕн Валерий Павлăвич Чкалăвăн ӳтне кремацине панă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройне В. П. Чкалăва пытарни

В. П. Чкалăвăн йулашки çулĕ

Сойузсен çурчĕн колоннăй залĕ. Епĕр пурăнакан вăхăтри аслă ђотчикпа уйăрăлмали вăççĕмĕш, йулашки кун. Чечек çыххисем аслă зала шăвăçайми тулнă. Вĕсене кăшни минутра татах илсе пыраççĕ. ССРС Верховнăй Советĕнчен, РСФСР Верховнăй Советĕнчен, наукăсен Академийĕнчен чечек çыххисем хунă.

Чĕрĕ чечек çыххисен купи татах та çӳллĕрех пулса тăчĕ. Çав чечексен купи тăрне Совет Сойуз Геройĕн Валерий Павлăвич Чкалăвăн кĕлне хунă урнăн траурлă катафалкне лартнă.

Ирхине ирех зала кĕртме пуçланă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн мухтавлă çыннисем пĕрмайах хисеплĕ хуралта тăнă.

13 сехет те 50 минут. Хисеплĕ хуралта А. А. Андрейĕв, А. А. Жданăв, М. Ф. Шкирйатăв, Н. А. Булганин йулташсем тăнă. Вĕсене Совет Сойуз Геройĕсем Молăкăв, Слепнђов, Шевеђов тата поет-орденоносĕц Лебедĕв-Кумач улăштарнă.

14 сехет. Урнă умĕнчи хисеплĕ хуралта çĕнĕ смена: Микойан, Петровский, Совет Сойузĕн Геройĕсем Йумашĕв тата Данилин йулташсем тăнă.

Хурлăхлă уйăрăлуи йулашки минучĕсем. Чечек çыххисен куписем патĕнче çар хуралĕ кăна йулнă. 14 сехет те 30 минут. Булганин, Шчербаков, Локтионов, Громăв, Байдуков, Беђаков, Йумашĕв, Данилин, Коккинаки, Молăкăв йулташсем урнăна лартнă траурлă катафалка йерипен илсе йăтнă. „Интернационал" выљанă. Унтан урнăна урама илсе тухнă.

Охотнăй рйад урамĕн тăршшĕпе çарăн хисеплĕ хуралĕ тăрса тухнă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн пур тĕслĕ войскисен представителĕсем те вăхăтсăр вилнĕ Геройа йулашки хут курса уйăрăлнă. Хурлăхлă процесси йерипен Хĕрлĕ плошчĕт патнелле пынă. Малта темĕн чухлĕ чечек çыххисене, Валерий Чкалăвăн портречĕсене йăтса пынă. Совет Сойуз Геройĕсем Водопйанăв, Љапидевский, Раскова тата ђотчик Шевченко Валерий Павлăвич Чкалăва паттăрлăхшăн, çирĕплĕхпе хăйулăхшăн наградăланă орденсене тытса пынă. Мускаври ĕççыннисен колоннисем хурлăхлăн, шăппăн утнă. Хăйсен тăван çĕршывĕн аслă ывăлне йулашки хут курса ăсатма тухнă нумай пинлĕ речĕсене шартлама сивĕ те салатма пултарайман.

Хĕрлĕ плошчĕт. Траурлă катафалка И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, А. А. Андрейĕв, Л. П. Берийа йулташсем илнĕ.

Мавзолей патне çитесси темиçе утăм çеç йулнă. Çав самантра Хĕрлĕ плошчĕт урлă сывлăш карапĕсем хавăрттăн вĕçсе иртеççĕ. Вĕсем—Чкалăвăн тусĕсем, ђотчиксем, вĕсем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сокăлĕсем, вĕсем хурлăхлă уйăрăлувăн йулашки минучĕсенче хăйсен йуратнă Геройне саљут панă.

Урнăна постамент çине лартнă. Мавзолей трибуне çине И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, Л. П. Берийа, Г. М. Димитров, Н. А. Булганин, А. С. Шчербаков, Г. Ф. Байдуков йулташсем хăпарнă.

14 сехет те 55 минут. Совет Сойуз Геройне Валерий Павлăвич Чкалăва асăнма пухăннă траурлă пухăва ПСК(б)П Мускав облăç тата Мускав хули комитечĕсен секретарĕ Шчербаков йулташ уçнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССРС Правителстви йачĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Булганин йулташ сăмах тухса каланă.

— Чкалăв тăван çĕршывшăн пурăннă. Вăл, халăх хушшинчен тухнăскер, халăха йуратнă,—тенĕ Булганин йулташ. — Социалисăм ĕçне сутакансене, пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене вăл пĕтĕм Чкалăвла хăйарлăхпа курайман.

Унтан Мускав хулинчи тата Мускав облăçĕнчи ĕççыннисен йачĕпе ПСК(б)П Мускав облăç тата Мускав хули комитечĕсен секретарĕ Шчербаков йулташ тухса сăмах каланă.

— Халăх Геройĕ Валерий Чкалăв,—тенĕ вăл,—совет ђотчикĕсемшĕн, совет çамрăкĕсемшĕн, пĕтĕм совет халăхĕшĕн шиксĕр тата хăйулă пулма вĕрентекен, хамăрăн тăван çĕршыва чĕререн парăнса ĕçлеме, çавăн пекех тăшмансемшĕн хăйар пулма, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăнса туса пыма вĕрентекен паха пример пулнă, халĕ те çавăн пек пример, малашне те çавах пулать.

Совет Сойуз Геройĕсен тата совет ђотчикĕсен йачĕпе аслă пилотăн çывăх тусĕсенчен тата соратникĕсенчен пĕри Совет Сойуз Геройĕ Байдуков йулташ тухса уйăрăлу сăмахĕ каланă. Вăл хăйĕн сăмахне çапла каласа вĕçленĕ.

— Прошчай, манăн савнă тусăм! Прошчай, совет халăхĕн йуратнă ывăлĕ. Прошчай, Сталин йулташ йуратнă çын! Прошчай, пирĕн мухтавлă йулташ! Епĕр, Совет Сойуз Геройĕсем тата çĕршывăн пĕтĕм ђотчикĕсем, сан пекех тăван халăха, хамăрăн Сталина пĕтĕм чĕререн кăмăлпа парăнса ĕçлеме пулатпăр. Есĕ хăвăн чĕрӳне тата пурнăçа панă ĕçшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн кĕрешме сăвăн вырăна çĕршер пин çын тăрĕç.

Траурлă пуху хупăннă. Сталин йулташ тата партипе правителствă руководителĕсем мавзолей çинчен анса урнăна йăтнă та Кремљ стени патнелле утнă.

15 сехет те 25 минут. Н. А. Булганин йулташ урнăна авалхи стена шăтăкне лартнă, вăл стена епĕр пурăнакан вăхăтри аслă ђотчикăн кĕлне ĕмĕрсем тăршшĕ ӳсрĕ.

Хĕрлĕ плошчĕтри йалавсене пурне те тайăлтарнă. Сывлăшра 21 хутчен артиллерилĕ саљут панă сасă кĕрлесе тăнă.

Чкалăв йатне çырнă мрамăр хăмапа урнăна лартнă шăтăка хупланă. „Интернационал", кĕрешӳсемпе çĕнтерӳсен аслă гимнĕ, пурнăç кĕвви йантранă. Çак пурнăçа Валерий Чкалăв çав тери йуратнă.

Чкалăв йачĕ—легендарлă Геройĕн йачĕ—ĕççыннисен чĕринче ĕмĕр пурăнĕ, вăл пирĕн мухтавлă, хăйулă ђотчиксене аслă тăван çĕршывăн чысĕшĕн, аслă Сталин чысĕшĕн паттăрла ĕçсем тума чĕнет.

(ТАСС).

Хĕрлĕ плошчĕтре В. П. Чкалăв йачĕпе пулнă траурнăй митинг

Н. А. Булганин йулташ сăмахĕ

(ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен)

Йулташсем! Пирĕн ретсенчен вилĕм Валерий Павлăвич Чкалăва илсе кайрĕ.

Совет Сойузĕ, ĕççыннисем тата парти пирĕн саманари аслă ђотчика, Совет Сойуз Геройне, чаплă гражданина, деятеле, Верховнăй Совет депутатне, Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бођшевиксен) Парти членне çухатрĕç.

Валерий Павлăвич Чкалăв вилнипе епĕр пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çарăн мăнкăмăллă соколне çухатрăмăр, вăл пысăк, вăйлă ирĕклĕ, тĕреклĕ характĕрлă, нимĕн умĕнче те шикленсе тăман çын пулнă. Вăл çак пĕтĕм пахалăхсене хăйĕн ĕçне питĕ аста пĕлнипе пĕрлештерсе тăнă.

Епĕр сисĕмлĕ туса, боевой йулташа, кристалл пек таса чунлă çынна çухатрăмăр.

Валерий Павлăвич Совет авиацин чи аста маçтăрĕ пулнă, Совет авиацине вăл пĕтĕм тĕнче умĕнче чапа кăларчĕ, ăна чечеклентерес, хăватлă тăвас ĕçе хăй пурнăçĕн çур ĕмĕрне ытла пачĕ.

Вăл нумай хăравçăсăр боевой ђотчиксем пăхса çитĕнтерчĕ, вăл çитĕнтернĕ ђотчиксем пĕр хут çеç мар хăйсен хăйулăхне, пултарулăхне кăтартрĕç, вĕсем пĕтĕм тĕнчене пирĕн авиацин çĕмĕрсе, аркатса тăкакан, никам çĕнтерейми вăйне кăтартрĕç.

Валерий Чкалăв Павел Григорйĕвич Чкалăвăн, Горький облăçĕнчи Васињйево-Слободари, халĕ Чкалăвскăри котеђшчикăн ывăлĕ пирĕн аслă халăхăн ӳчĕпе йунĕнчен тухнă çын.

Вăл халăхпа пĕрле, бођшевиксен партийĕ йертсе пынипе, Сталин йулташ хăй тӳррĕн йертсе пынипе ӳсĕ пирĕн аслă Совет çĕршывĕн Геройĕ пулса тăчĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ çак кун, кунта, Хĕрлĕ плошчĕтре çеç мар, пĕтĕм Совет Сойузĕнче мĕлйуншар ĕççыннисем çак çухату пирки питĕ хыттăн куљанаççĕ.

Валерий Чкалăв хăй тĕллĕн пурăнма мĕн çамрăкранах пуçланă.

Вăл мĕн хăй тĕллĕн пурăнма пуçланăран вара хăйĕн йулашки кунĕсене çитиччĕнех, мĕн трагедилле вилĕмпе пĕтиччĕнех рабочи клас ĕçĕшĕн тĕрĕс пулнă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-хăватне парса кĕрешнĕ.

1919 çултах, пирĕн çĕршыври чи лайăх çынсем ретне тăрса, вăл Октйабĕр революцийĕнче кĕрешсе илнисене сыхлама хăй ирĕккĕн фронта кайнă.

1923 çулта епĕр Чкалăва ђотчик пулса ĕçлени йенчен пĕлетпĕр. Ăна истребителĕсем çинче вĕçекенсен аслă пилотаж шкулне илнĕ.

Малала вăл Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш-Çар вăйĕсен ђотчик-испытателĕ пулса ĕçлет.

Çав вăхăтсенчи çулсенчех вăл авиацире кăна мар, халăхăн пысăк сийĕ хушшинче хăйĕн вĕçĕмсĕр пултарулăхĕсене пула паллă, пуртепĕлекен ђотчик пулса тăрать, вăл пĕрмайах, авиаци техникин ĕçне туйса тăнинче, пирĕншĕн хаклă вĕренсе алла илсе, малала пырать, ун çинчен хăвăрт тавçăрса илме пултаракан, хăйулă, хăравçăсăр Чкалăв тесе калаççĕ.

1935 çулта çĕнĕ конструкцилĕ самољотсене сăнас ĕçре пултарулăх тата хăйулăх кăтартнăшăн правителствă Валерий Павлăвич Чкалăва аслă награда — Ленин орденĕ парса наградăланă.

1936 çулти ийуљ уйăхĕнче Чкалăв йулташ хăйĕн йулташĕсемпе пĕрле, Байдуков, Беђаков йулташсемпе, Мускав—Амур çинчи Николайевск Сталинла маршрут тăрăх пĕтĕм çĕршыв асра тытакан историлĕ вĕçев туса иртерет.

Хăвăрт тавçăрса илме пултаракан, хăйулă, хăравçăсăр Чкалăв умне хамăр çĕршыв интересĕсемпе тӳррĕмĕнех çыхăнса тăракан, тарăн шухăшлă задач тухса тăрать: тăван çĕршыва сăнаса вĕренесси, ăна пĕлесси тата сыхласси.

Чкалăв йулташ çак халиччен пулман вĕçеве Совет çĕршывĕ тăрăх, унăн инçетри чиккисен хĕррипе, вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан океансен çийĕпе, çилтăвăлсемпе пĕлĕтсем витĕр туса иртернĕ.

Чкалăв самољочĕ ку таранччен сахал пĕлекен, пĕчĕк утрав çине—Удд, халĕ Чкалăвăн мухтавлă йатне панă утрав çине анса ларнă. Вăл пĕр анса лармасăр вунă пин километра йахăн вĕçнĕ, вăл шутра, 5 пин километр ытла икĕ тинĕспе Çурçĕр пăрлă океан çийĕпе вĕçнĕ.

Правителствăпа парти çак самољот командирне, Валерий Павлăвич Чкалăва, унăн ытти йулташĕсемпе пĕрле, Совет Сойуз Геройĕн йатне памала тата Ленин орденĕ парса наградăламала тунă. Ку иккĕмĕш орден пулнă.

Тепĕр çулталăкран, 1937 çулти ийуњ уйăхĕнче, Чкалăв йулташ историре пирвайхи хут Мускавран Çурçĕр пољусе урлă Америкăна, екипаж пуçлăхĕ пулса, вĕçет.

Çавăн пек вĕçев авиаци историнче нихăçан та пулман-ха. Тинĕссем те, океан та, пăрсем те, сăртсем те, нимĕнле чăрмавсем те Валерий Чкалăва тытса чарма пултарайман.

„Нимĕнле чăрмавсем те, нимĕнле сивĕсем те, нимĕнле çил-тăвăлсем те тата самољот пăрланса ларнисем те пире тытса чарма пултараймарĕç". Чкалăв йулташ хăй çапла каланă.

Чкалăвăн çав хăйулăхпа паттăрлăх ăçтан пулнă-ха?

Йут çĕршывран çакăн пек ыйтни çине вăл хăй çакнашкал сăмахсемпе ответ парать, вăл сăмахсенче пĕтĕм Чкалăв курăнса тăрать.

„Пирĕн пурнăç пĕтĕмпех тăван çĕршывшăн пулса тăрать. Сталинла саманара пурăнакан мĕлйуншар çынсем çĕнсе илнĕ аслă телейе епĕр кирек хăçан та кирек ăçта та йунпа хӳтлĕпĕр"—тенĕ вăл.

„Пирĕнтен час-часах: хăстарлăх çăлкуçне екипаж ăçтан илсе тăнă?—тесе ыйтаççĕ.

Пирĕн ответ пĕрре: 170 мĕлйунлă совет халăхĕ çывăхра пулнине, тăван çĕршыв тăрăшнинче, пирĕн çинчен шухăшланине ăнланса илнинче, çак сехетсенче пирĕн çинчен Сталин йулташ аса илет, вăл ачашшăн тимлесе пăхнине епĕр иртнĕ çулхи вĕçевре те куртăмăр.

Çавăн пек шухăшсемпе тата туйăмсемпе нимĕнле циклонсем те хăрушă мар!"

Вăл тăван çĕршывшăн пурăннă. Вăл, халăх хушшинчен тухнăскер, халăха йуратнă.

Вăл социалисăм ĕçне сутакансене, пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене Чкалăвла хăйарлăхпа курайман.

Вăл пĕтĕмпех, нимĕн йулмиччĕнех, партине парăннă пулнă.

Вăл Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр тата хĕрӳллĕн йуратнă.

Çак туйăмсемпе унăн йăвăрлăхсем хăрушă пулман, нимĕнле чăрмавсем те ăна тытса чарма пултарайман.

Çав туйăмсем ăна вăй, хăйулăх тата паттăрлăх панă.

Епĕр ăнланакан паттăрлăх вăл пирĕн çĕршывăн чи лайăх патриочĕсем етемĕн чи таса пахалăхсене палăртни пулать, вăл патриотсем бођшевикла партин аслă ĕçĕшĕн, хăйсен халăхĕн телейĕшĕн, коммунисăмшăн ырми-канми кĕрешеççĕ!

Пирĕн геройсем халăхран тухнă тата унпа çыхăнса тăраççĕ, вĕсем унăн ирĕк-кăмăлне, интересĕсене тата ĕмĕчĕсене палăртса тăраççĕ.

Совет Сойузĕн Геройĕсене çĕршыв çуратса тăрать, ку çĕршывра експлоатацине пĕтернĕ, ку çĕршывра ирĕклĕ аслă халăх пурăнать тата ĕçлет.

Валерий Чкалăв сăнарĕнче пирĕн çĕршыври, Сталинла саманара ӳссе çитĕннĕ геройсен чи лайăх тĕслĕхĕсем палăрса тăраççĕ.

Валерий Павлăвич Чкалăв—пирĕн бођшевикла парти воспитани парса ӳстернĕ çĕнĕ çын сăнарĕ.

Унăн сăнарĕ пирĕншĕн йăланах революцишĕн хăйне хĕрхенмесĕр кĕрешнин тата коммунисăм ĕçĕшĕн бођшевикла тĕрĕс пулнин примерĕ пулмала.

Епĕр пайан тăван Валерий Павлăвичпа тарăн хурланса уйăрăлатпăр.

Пирĕн тăван çĕршывшăн, коммунисăм ĕçĕшĕн кĕрешекен çакăн пек борецсен вырăнне çĕнĕрен те çĕнĕрен геройсем çĕкленмеле.

Вĕсен характĕр Чкалăвăн пек çирĕп пулнине, унăн хăйулăхĕпе паттăрлăхне илмеле тата вĕсене ĕçе отличнă пĕлнипе çыхăнтарса пымала.

Вĕсен халăх ĕçне, парти ĕçне çавăн пекех иксĕлми парăнмала, халăх ирĕк-кăмăлне, хăйсен аслă çĕршывĕн чысĕпе тивĕçлĕхне хăйсен чĕрисенче çĕклесе пымала.

Чкалăв сăнарĕ совет гражданĕсене, социалисăмла тăван çĕршыв патриочĕсене Валерий Чкалăв пынă çулпа хамăрăн аслă социалисăмла тăван çĕршыв мухтавĕне хăвачĕшĕн малашнехи паттăр ĕçсем тума чĕнмеле.

Чехословакири депутатсен палатин ларăвĕнче

Чехословакири депутатсен палатинче правителствă декларацине сӳтсе-йавасси правителствă кĕтмен çĕртенех, тăвăллăн пулса кайнă. Словакири национађнăй парти представителĕ Пружинский правителствăн тулашрипе шалти политикине ырласа сăмах каланă хыççăн, депутатсен палатинчи коммунисла фракци председателĕ Запотоцкий сăмах илнĕ. Запотоцкий çеңтабĕрĕн 30-мĕшĕнчи капитуљаци сăлтавĕсене асăнса, уншăн айăплисем Мӳнхĕнра Чехославакине сутса йанă Англипе Франци правителствисем кăна мар, тата çĕршыв ăшĕнчи реакцилĕ группăсем те пулаççĕ тенĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хамăр республикăна никама пăхăнса тăман çĕршыв тăвассишĕн кĕрешессинчен пăрăннă. Запотоцкий правителствăпа фашиссен хаçачĕсем ССРС çине еleклесе тапăннине сирсе пăрахнă, ССРС анчах хăй çине илнĕ обйазателствăсемшĕн вĕçне çитиччен тăнă, тенĕ.

Правителствăна чрезвычайнăй полномочисем парассине хирĕç пулса, Запотоцкий: рабочи класăн малта тăракан пайĕ малашне те пур майсемпе те ĕççыннисен интересĕсемшĕн кĕрешĕ, тенĕ.

Запотоцкий хыççăн „националњное единство" парти председателĕн заместителĕ Черны тухса каланă. Вăл хăйĕн ытла та тĕксĕм сăмахĕнче правителствă декларацине ырланă тата правителствăна чрезвычайнăй полномочисем парассишĕн тăнă.

Депутат Шварц сăмах тухса калани пысăк сенсаци тунă. Шварц малтанхи вăхăтра „народная лига" текен реакцилĕ партире тăнă, анчах вăл хăйĕн партийĕпе пĕрле „националњное единство" партине кĕме килĕшмен.

Шварц хăйĕн сăмахĕнче хађхи правителствăн тулашри политикине тата „националњное единство" партин лидерĕсем: Беранпа Черны çеңтабĕрти кризис умĕн тытнă капитуљантла çулйĕре хыттăн критикленĕ.

Шварц малала тата „народная лига" текен фашисла партин лидерĕнчен, Стржибрнăйран, кăçалхи мартăн 30-мĕшĕнче илнĕ çырăва вуласа панă. Çак çырура Стржибрнăй переворот планĕ çинчен каласа панă. Çак çыру çинчен Шварц апрелĕн 4-мĕшĕнче примйер-министр пулнă Годжана тата шалти ĕçсен министрĕ пулнă Чернына пĕлтернĕ. Анчах та вĕсем Шварц зайавленине пытарса хунă. Çак çыру вăл правителствăра çеңтабĕр уйăхĕнче хатĕрленнĕ каварлашу тахçантанпах пулма пуçланине çирĕплетсе парать.

Шварц правителствă хаçачĕсем Франципе Совет Сойузĕ çинчен еleклесе çырнисене хирĕç тăнă.

Шварц сăмахĕсем правителствăн парти членĕсене шăртлантарса йанă. Шварц сăмах каланă вăхăтра примйер-министр Беран лару залĕнчен тухса кайнă.

Правителствă лагерĕнче тăракан хăшпĕр депутатсем зайавленисем тунă хыççăн, правителствăна чрезвычайнăй полномочисем парасси çинчен сасăлама тытăннă.

(ТАСС).

Аслă земљак çинчен ĕмĕрне те манмăпăр

ГОРЬКИЙ, декабĕрĕн 16-мĕш. Çĕрле радио Совет Сойузĕн Геройĕ Валерий Павлăвич Чкалăв вилни çинчен пĕлтернĕ хыпара илсе çитернĕ. Облăçри предприйатисенче, районсенче траурлă пухусем пулса иртнĕ.

Молăтăв йачĕпе тăракан автосавăтри сборăчнăй цехри пухура инженер Казачков йулташ тухса каланă.

— Валерий Павлăвич Чкалăв халăхăн шанчăклă ывăлĕ пулнă,—тенĕ вăл.—Вăл халăха йуратнă. Халăх та ăна йуратнă. Паттăрлăх, Ленин—Сталин парти ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр парăнни, халăх тăшманĕсене хирĕç нимĕн килĕшми кĕрешни—çакăн пек ĕнтĕ пирĕн тăванăн, сталинла сокăлăн пахалăхĕсем.

В. П. Чкалăв тăпри çине хумали чи лайăх чечек çыххи вăл пирĕн депутат, аслă пилот мĕнле ĕçленĕ, çавăн пек ĕçлесси пулать.

Арзамас районĕнчи Выйездновскри промколхозри траурлă пухура РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Домнина йулташ тухса каланă.

— Валерий Павлăвичпа тĕл пулнине епĕ нихăçан та манас çук,—тенĕ вăл.—РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ вăхăтĕнче Чкалăв йулташ хăйĕн земљакĕсем—депутатсем патне пычĕ. Вăл чĕререн килекен ăшă калаçура пире сталинла маршрутпа Çурçĕр Америкăна геройла вĕçсе кайни çинчен каласа пачĕ. Хамăрăн аслă земљак çинчен ĕмĕрне те манмăпăр. Пирĕн стахановла ĕç уншăн чи лайăх памĕтник пулĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршывсенчи пичет Чкалăв йулташ вилни çинчен

Йут çĕршывсенчи хаçатсем Совет Сойуз Геройĕ комбриг В. П. Чкалăв вилни çинчен тĕплĕн пĕлтерсе çыраççĕ.

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Францире тухнă чылай хаçатсем Чкалăв йулташ портретне пичетлесе кăларнă тата Чкалăв йулташ çинчен статйасем çырнă. Хаçатсем уйрăмах Чкалăв йулташ Байдуковпа Беђаков йулташсемпе пĕрле 1937 çулта Мускавран Çурçĕр пољусĕ урлă Америкăна геройла вĕçсе кайнине паллă тăваççĕ.

„Пти паризйен" хаçат: Чкалăв вилнипе „Совет Сойузĕн чи лайăх ђотчикĕсенчен пĕри" çĕре кĕчĕ тесе çырать. Францири компарти хаçачĕ „Йуманите" малтанхи страницăра аслă ђотчикăн—Чкалăв йулташăн портретне: „Совет авиацийĕ траурта" тесе çырнă заголовкăпа пичетлесе кăларнă.

Чехословакире тухакан хаçатсем чаплă совет ђотчикĕ вилни çинчен пĕлтерсе, Чкалăв йулташăн биографине тĕплĕн пичетлеççĕ, вăл тĕнчери авиаци умĕнче тунă питĕ пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсене паллă тăваççĕ. Чылай хаçатсем Совет Сойуз халăхне йăвăр çухату пирки хыттăн куљанни çинчен пĕлтерсе çыраççĕ.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи сывлăш-çар вăйĕсен начаљникĕ Арнољд ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ: „Америкăри çар авиацийĕ пĕтĕм тĕнчере паллă ђотчик—Совет Сойуз Геройĕ Валерий Чкалăв сарăмсăр вилнĕ пирки хытă куљанать",—тенĕ.

Испани компарти хаçачĕ „Френте Рохо" Валерий Павлăвич Чкалăв йулташ йачĕпе çырнă статйа пичетлесе кăларнă. Вăл статйара: «Чкалăв, Совет халăхĕн ывăлĕ, Папанин пекех, Хасан кӳлли патĕнчи геройсем пекех, çĕнĕ çын прототипĕ пулнă. Вăл пĕччен мар. Совет Сойузĕнче Чкалăвсен легионĕсене воспитани парса çитĕнтереççĕ", тенĕ.

Перепис умĕн

ВĂРМАР. Переписре ĕçлеме çирĕплетнисенчен 115 çын аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă. 97 çын иртнĕ халăх переписĕнче хутшăнса ĕçленĕ.

Инструктăр-контрољорсене, счетчиксене тата ытти кадрсене те вĕрентсе хатĕрленĕ.

Йалсенче пулас перепис çинчен ăнлантарасси сарăлсах пырать.

В. Алендейĕв.

ПĔЛТЕРНИ

Çак çулти декабĕрĕн 21-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Строителсен клубĕнче Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулать.

Кун йĕрки:

1. ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен.—Докладчик Лапин йулташ.

Пухăва, пропуск тăрăх кĕртеççĕ. Пропусксене партком секретарĕсемпе парторгсен ПСК(б)П хула комитетĕнче илмеле.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕ Сталин йулташа

Хаклă Иосиф Виссарионăвич!

Ленинла-сталинла комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕ тата ПСÇЛКС райкомĕсен çекретарĕсем, ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене сÿтсе-йавма пухăннăскерсем, Сире, социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыракана, мĕнпур ĕççынвисен аслă çулпуçне тата учитĕлне, телейлĕ совет çамрăкĕсен тусне комсомолла хĕрÿлĕ салам йараççĕ.

Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ хăйĕн шанчăклă помошникĕ, кĕрешÿри резерви пулса тăракан комсомола туса хучĕ тата пăхса ÿстерчĕ. Большевиксен партийĕ ун çине тăрăшса пăхнипе хавхаланса, комсомол Ленин—Сталин йалавне мухтавлăн та хăйулăн малала илсе пырать, ун тавра хамăрăн ырă Совет çĕршывĕнчи мĕлйуншар çамрăксемпе хĕрачасене пĕтĕçтерсе пырать.

Комсомол большевиксен партийĕ, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пынипе вăйлă та çирĕп. Парти çулйĕрĕ—комсомол çулйĕрĕ пулнă, халь те вăл çаплах, малашне те çаплах пулать.

Пуйсĕр тăшмансем, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсем ленинла-сталинла комсомола большевиксен партийĕнчен уйăрса йама, унăн йертсе пырас оргăнне фашисла çыввĕлеревсем, шпионсем тата диверсантсем йарса пĕр хут çеç мар хăтланса пăхнисем ăвăçсăрлăх тÿсрĕç.

Комсомолăн Чăваш организацийĕ ленинла-сталинла пĕтĕм комсомолпа тата совет çамрăкĕсемпе пĕрле ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пысăккăн кăмăлласа йышăнса илчĕ. Парти Тĕпкомĕ тата Есĕр, Сталин йулташ, пулăшнипе п л е н у м ПСÇЛКС Тĕпкомĕн кивĕ руководствин çĕрĕк, партине хирĕçле практикине уçса палăртрĕ, политикă тĕлĕшĕнчен панкрута тухнă, витĕрех пăсăлса кайнă çынсене комсомол Тĕпкомĕнчен хăваласа кăларчĕ. Çакăнпа парти тата Есĕр, Сталин йулташ, пĕтĕм совет çамрăкĕсене калама çук пысăк пулăшу патăр.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисем комсомол Чăваш организацине тÿрремĕнех тивеççĕ. Пирĕн организацине йертсе пырас ĕçре нумай вăхăт хушши халăхăн усал тăшманĕсем ларнă.

ПСÇЛКС облăçри XIV-мĕш конференцийĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри пленумĕнче Есĕр кăтартнисемпе тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш пленумĕн решенийĕсемпе хĕçпăшалланса тата партипе халăхăн тÿрĕ те çирĕп хĕрĕ Мишакова йулташ пулăшнипе, ПСÇЛКС облăçри комитечĕн тăшманла руководствине уçса палăртрĕ. Мишакова йулташ пирĕн республикăри парти тата комсомол организацисене йертсе пырас ĕçе хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсене хирĕç нумай вăхăт хушши кĕрешсе пынă. Халăх тăшманĕсем Мишакова йулташа елеклене тата ăна ПСÇЛКС Тĕпком аппаратĕнчен кăларттарса йанă. Партин Тĕп Комитечĕ пулăшнипе большевикла чăнлăх çиĕеле тухрĕ.

Пленум решенийĕсенче пĕтĕм парти тата Есĕр, Сталин йулташ, совет халăхĕн ÿссе çитĕнекен ăрăвне воспитани парассишĕн тăрăшнине куратпăр.

Епĕр хамăрăн большевикла партиве тата Сире, Сталин йулташ, епĕр халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешес хĕçпăшала нихăçан та парахмăпăр, тесе шантаратпăр. Епĕр большевиксен парти çулйĕрне вĕçне çитийех сыхласа пырăпăр тата комсомолти тăшман кайашĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкăпăр.

Комсомолăн Чăваш организацийĕ ĕçĕнче комсомолĕцсене идейăлă-политикăлă воспитани парас, çĕнĕ кадрсем ÿстерес тата халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре тунă йăнăшсемпе çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе умра пысăк ĕçсем тăраççĕ.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне"—марксисăм-ленинисăмăн тĕп пĕлĕвĕсен çак паха енциклопедине—сĕтел çинчех тытмали кĕнеке тăвăпăр, мĕншĕн тесен вăл пире большевисăмпа хĕçпăшаллантарать, пирĕн çивĕчлĕхе, çирĕплĕхе тата большевикла сыхăлăха ÿстерет, тăшмансем темĕнле чейе витĕнсен те вĕсене тупса палăртма вĕрентет.

Актив çакна шантарать Сире, Сталин йулташ,—орденлă Чăваш республикĕнчи комсомолĕцсем революцилĕ теорийе тăрăшса вĕренсе, хăйсем идейăлă хĕçпăшалланнине ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пырса, „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май партин пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе пырса, большевикла сисĕмлĕхе тата ытларах ÿстерĕç, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла ирсĕр агенчĕсене вĕçне çитийех çĕмĕрсе тăкĕç.

Большевисăм идейин хăватлă хĕçпăшалĕпе ăвăрланса, епĕр хамăр ретсене партин Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра, пирĕн çулпуç тата учитĕл Сталин йулташ тавра тата ытларах пĕтĕçтерĕпĕр, партипе пĕрле, вăл йертсе пынипе малала çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем патнеле кайăпăр.

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми аслă йалавĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван коммунисçен большевикла партийĕ!

Сывă пултăр Ленин ĕçне малала илсе пыракан—пирĕн учитĕл тата тăван атте Сталин йулташ!

„Путь Ильича" колхозри (Улатăр р.) колхоз интеллигенцийĕ. Сылтăмран сулахайала: туллимар вăтам шкул директăрĕ А. М. Кльукин, акушерка О. Брызгалăва, йалсовет председатĕлĕ И. Н. Митунин, зоотехник Ивен йулташсем.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Хаçатсене пăхса тухни

Районри хаçатсенчи парти пурнăçĕн пайĕ

Пирĕн республикăри районри хаçатсенчен чылайĕшĕ хаçатсенче „парти пурнăçĕн пайĕ" кашни номĕртех пулмали çинчен, парторганизацисен ĕçĕсене тăтăшах тата тĕплĕн çутатса пымали çинчен парти Тĕпкомĕ йышăннă икĕ постановленирен те тивĕçлĕ вывăдсем туман.

Пур хаçатсенче те тенĕ пекех „парти пурнăçĕн пайĕсем" сайра-хутра çеç тухаççĕ. Парти организацисен ĕçĕсем çинчен сайра-хутра пичетленĕ материалсен те пахалăхĕ çителĕксĕр. Парти организацисен нумай тĕрлĕ ĕçĕсене тĕплĕн, тарăннăн кăтартмаççĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕç" хаçат кун сиктерсе тухать. Партин районри организацийĕ пĕчĕк мар, республикăри пысăк парторганизацисенчен пĕри. Çапла пулин те, хаçат октăбĕрпе нойабĕр уйăхĕсенче тата декабĕрĕн малтанхи çуруйăхĕнче парти пурнăçĕ çинчен пурĕ те 4 номĕрте çеç çырнă. Хаçат редакцийĕ парти Тĕп Комитечĕн постановленийĕ увшăн обйазатĕлнă мар тесе шутлать пулмала.

„Социалисăмлă ĕç" хаçат редакцийĕ парти Тĕпкомĕ парти пурнăçне çутатма коммунисçен сарлака массине хаçат ĕçне активлăн хутшăнтармала, тесе кăтартнине пурнăçа кĕртмест. Парти пурнăçĕ çинчен çыракан автăрсен коллективĕ çук. Районри парткабинет пуçлăхĕ Котлейĕв, Ионова, Иваницкий йулташсене шута илмесен, партком çекретарĕсен, парторгсен, пропагандиссен, уйрăм коммунисçен статйисемпе заметкисене хаçатра курма çук. Парти райкомĕн çекретарĕсем, инструктăрсем хаçат ĕçне пачах хутшăнмаççĕ.

„Хĕрлĕ йалав" (Вăрмар р-нĕ) парти пурнăçĕ çинчен тăтăшах çутатма тăрăшать. Йулашки вăхăтра райком инструктăрĕн пĕр статйа, парторгăн тепĕр статйа пичетленсе тухнă. Анчах хаçатра тухнă материалсен пахалăхне пĕрре те мухтама çук. 108-мĕш номĕрте райком инструктăрĕ Степанăв йулташ çырнă „Пуху протоколĕсене лайăх йĕркелессишĕн кĕрешер" йатлă статйара пуçламĕш парторганизацисем пуху протоколĕсене йĕркелесси çине çиелтен пăхнине кăтартса, ку ĕçе йĕркелесси çинчен çырасшăн пулнă. Анчах статйара „протоколсене райкома вăхăтра тăратмала, пуçламĕш организацисене протоколсене лайăх йĕркелеме пулăшасси манăн тĕп ĕç пулать" тевисĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Пуçламĕш парторганизацисем коммунисçен пухăвĕсен протоколĕсене йĕркелесси çине çиелтен пăхнă пĕр конкретлă пример та кăтартман, ĕçе йусама пулăшакан сĕвÿ паман. „Социалисăмлă ĕç" тата „Хĕрлĕ йалав" хаçатсенче парти пурнăçĕн пайĕсем пуринчен ытла коммунисçен районти пухăвĕсем пулса иртнĕ хыççăн тухаççĕ. «Хĕрлĕ йалав» райком ларăвĕ çинчен, сочувствуйушчисемпе ĕçлесси çинчен, кандидатсене партилĕ ĕçе хутшăнтарасси çинчен çырать. Анчах автăрĕ—пĕр çын, хаçат редактăрĕ Филиппăв йулташ çеç.

Паллах, хаçатсем парти активĕнчен уйăрăлнине пула „Социалисăмлă ĕç" тата „Хĕрлĕ йалав" редакцисем районти парти организацисен пурнăçне тĕрĕс мар, пĕр йенчен çеç çутатаççĕ. „Хĕрлĕ йалав" йулашки икĕ уйăх хушшинче пичетленĕ 8 материалран, парти организацин лайăх опычĕ çинчен калакан пĕр статйа çеç. Ыттисем пурте районти парторганизация пурнăçĕпе ĕçĕсене тĕксĕм йенчен çеç çутатаççĕ. Парторганизаци йалсоветсене, колхозсене, шкулсене—пĕтĕм района йертсе пырать. Районра колхоза лайăх йертсе пыракан, шкулти вĕренÿ ĕçне чипер йĕркеленĕ, политикăлă агитаци ĕçне куллен туса пыракан, партири тата партире мар большевиксене марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшаллантарасшăн тăрăшакан парторганизацисем, парткомсемпе парторгсем, уйрăм коммунисçем пур. Епĕр пăхса тухнă икĕ хаçат та çак ытусене пачах çутатмаççĕ.

Парти организацин лайăх ĕç опычĕсем çинчен хăйсем çак ĕçе тунă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлекен йулташсем çеç кирлĕ пек çутатма пултараççĕ. Хаçатсем хăйсем тавра автăрсен коллективне организацилеменни çак паха задачăна пурнăçа кĕртме чăрмантарать. Çакна пула хаçатсем парторганизацисен нумай йенлĕ, нумай тĕрлĕ ĕçĕсене туллин çутатаймаççĕ.

„Социалисăмлă ĕç", „Хĕрлĕ йалав" хаçатсем халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандăсен йулашкисене тăрă шыв çине кăларассишĕн кĕрешес задачăна хаçатсем хăйсен страницисенчен сирсе пăрахни те вĕсем парторганизацин пурнăçĕпе, ĕçĕпе пурăнманни çинчен калать.

Хаçатсен обйазăнăçĕ парти пурнăçне тарăннăн, тĕплĕн çутатасси, тăшмансен йулашкисене хирĕç хаяррăн кĕрешсе парти Тĕп Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртесси пулать.

Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса"

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен варрине çитиччен Российăра рабочи йухăмĕ социалисăмпа çыхăнман пулнă. Апла пулин те, рабочи йухăмĕ пĕрмайах çÿлеле хăпарса, ÿссе пынă, вăл çĕнĕрен çĕнĕ районсене сарăлнă, рабочисен кĕрешĕвĕ стихийлă пулса пынă, стачкăсем ансăр тата економикăлă характĕрлă пулнă.

Чăнах те, 80-мĕш çулсенче рабочи йухăмĕ ÿссе пынă никĕс çинче тата хĕвеланăç Йевропăри марксиссен влийанийĕпе Российăра чи малтанхи марксисла кружоксемпе группăсем пулма пуçланă. Анчах вĕсем унчухне сахаллăн шутланнă, рабочисемпе пачах çыхăнса тăман тесен те йурамала, вĕсем кружок ăшĕнчи пропагандăпа кăна чарăннă.

Малтанхи марксисла организацисем рабочисен массăлă йухăмне ытлашши пысăк влийанийĕх кÿреймен. „Освобождение труда" группă та, 1883 çулта Швейцарире тунăскер, практикăра рабочисен йухăмĕпе начар çыхăннă пулнă. Вăл йут çĕршывсенчен Российăна йарса тăракан литературă интеллигенци тата малта пыракан рабочисен сахал çыннисем хушшинче çеç сарăлнă. „Освобождение труда" группă вырăс социал-демократине теори тĕлĕшпе çеç никĕслесе хывнă, рабочи йухăмĕ йенне пĕрремĕш утăм тунă, — тесе çырнă Ленин. Анчах та, бойевой марксисла парти тума рабочи класа социалисăмлă идейăсемпе хĕçпăшаллантармала пулнă. „мĕншĕн тесен социал-демократи, — тесе çырнă Ленин, — социалисăмла рабочи йухăмĕн çыхăнăвĕнче тăрать". Çак задача татса парассине Ленин хăй çине илнĕ. Унăн Петербургри марксисла кружоксенчи пирвайхи выступленийĕсем (Петербурга вăл 1893 çулта кĕркунне куçнă) ăна Петербургри марксиссен пурте йышăннă руководитĕлĕ туса хунă. Ленин социал-демократсене хăйсен тимлĕхне Маркс ĕçĕсене абстрактлă вĕренессинчен марксисăмпа вырăс Российăн пурнăçĕнче усă курма вĕренесси çине хуртарнă. Вăл Российăри капиталисăм аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене тата вырăс социал-демокрачĕсене ĕçлеме тивнĕ обстановкăна пит тарăннăн тата практикăлă вĕреннĕ.

Марксисăма малашне сарса пырас тесен тата социалисăмлă ăнланулăха рабочи йухăмне кĕртсе пырас тесен народниксене, марксисăмăн çав усал та хăйар тăшманĕсене, çĕмĕрсе тăкмала пулнă. „Хăйĕн „Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов?" (1894 çул) йатлă кĕнекинче Ленин народниксен чăн-чăн сăнне уçнă, вĕсем халăхăн суйа „тусĕсем" пулнине, чăннипе халăха хирĕç пынине вĕçне çитийех тăрă шыв çине кăларса палăртнă" („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 20). Çав кĕнекере Ленин вырăс марксисĕсен программине малала сарса пынă, „социалисăмлă рабочи партине организацилес" задачă кăларса тăратнă" (т. I, стр. 189).

Ленин вăл çулсенче малта пыракан рабочисемпе çыхăнса ĕçлессине хăй туса пырать, 1895 çулта Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" организацине 20 йахăн марксисла кружоксене пĕрлештерет — „çакăнпа вăл рабочисен революцилĕ марксисла партине тăвассине хатĕрленĕ" („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 18).

Ленин Петербургри сойуза пĕрлешĕнĕ" кружоксем марксисăма пропагандăлассинчен рабочисен массисенче сарлакан агитаци тăвасси çине куçмала тума, рабочисен куллейхи нушисемпе требованийĕсем çине çавăрăнса пăхмала тата рабочисен йухăмне политикăлă йертсе пымала тума пултарнă.

Организацилĕх тĕлĕшĕнчен Петербургри „Союз борьбы"-не марксисла кружоксене мĕнле те пулсан хапрăксемпе тата савăтсемпе ытларах таччăн çыхăнса тăмала пултăр, рабочисен стачкăлă кĕрешĕвне хăварт хутшăнма тата çав кĕрешĕве йертсе пыма май пулмала тунă.

„Союз борьбы"-на йертсе пыракан марксиссен тĕп группи,—унăн пуçĕнче Ленин тăнă,—„стариксен" группи тенĕскер, хăйсем хушшинчен центр туса уйăрнă, вăл центр вара сойузăн районсенчи мĕнпур ĕçне пĕрлештерсе тăнă. Ленина сойузăн пур изданийĕсен те редактăрĕ тунă. Йертсе пыракан группăн членĕсене Петербургри кашни уйрăм районсем çумне çирĕплетнĕ пулнă. Çапла майпа Петербургри „Союз борьбы" Петербургри чи пысăк савăтсемпе тата хапрăксемпе çыхăнса тăнă. 1895 çулти стачкăсем Петербургри „Союз борьбы" йертсе пынипе пулса пынă, çакна пула вăл стачкăсем хăйсен организацилĕхĕпе тата тимлĕхĕпе палăрса тăнă. Англи капиталисĕн Торнтон хапрăкĕнчи ткачсен забастовки рабочисем çĕнтернипе пĕтнĕ, Лаферм хапрăкĕнчи тата ытти предприйатисенчи стачкăсем те ăнăçлăн пулса иртнĕ.

Стачкăла йухăмăн çĕкленĕвĕ 1896 çулта çулла калама çук вăйлăн пулнă. Ун пеккине патша Российĕ нихăçан та курман. Петербургри „Союз борьбы" ĕçлесе пынипе Петербургри пир-авăр тĕртекен рабочисен тĕлĕнмеле пысăк стачки пулнă, стачкăна 30 пин рабочи хутшăннă. Хăйĕн сарлакăшĕпе тата организацилĕхĕпе çав стачкă çĕршыва хыттăн туйтарнă. Вăл марксиссем йертсе пыракан рабочи клас йепле пысăк вăй пулса тăнине кăтартса панă. „90-мĕш çулсенчи рабочисен йухăмĕ,—çырнă Ленин,—политикă тĕлĕшĕнчен сарлака пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ". (т. II, стр. 536). Петербургри „Союз борьбы" рабочисен çивĕч нушисемшĕн пыракан економикăлă кĕрешĕвне патшан ирсĕр стройне пĕтерсе хурассишĕн пыракан политикăлă кĕрешÿпе пĕлсе çыхăнтарса пынă. „Ленин йертсе пынипе Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" Российăра чи малтан социалисăма рабочисен йухăмĕпе пĕрлештерессине пурнăçа кĕртсе пыма тытăннă" („ПСК(б)П Историйĕ", стр. 18).

Çав ĕçре Ленин аллинчи çивĕч оружи—куллейхи событисем çинчен ăнлантарса паракан социалисăмлă прокламацисемпе листовкăсем пулса тăнă. Уççăн, ăнланмала сăмахсемпе çырнă листовкăсем чи кăткăс ыйтусене тĕрĕс, тÿрĕ ответсем панă, рабочисене вĕсем пĕлсе тăракан куллейхи фактсенчен политикăлă вывăдсем тума пулăшнă.

„Листовкăсен" тĕп содержанийĕ хапрăксенчи йĕркесене питлесе кăтартасси пулнă" (Ленин). Листовкăсенче ĕçĕн етемле мар йăвăр условийĕсене, хуçасемпе маçтăрсен хăйарлăхне çырса кăтартнă, требованисем кăларса тăратнă, вăл требованисемшĕн рабочисене кĕрешме чĕннĕ. Çывăх тăракан примерсем, ăнланулă сăмахсем рабочисене çакна кăтартса панă: „заводчиксем те, полици те, государствăн мĕнпур влаçĕ те—пурте вĕсем пĕрле тата пурте пире хирĕç тăраççĕ". Çакăн пек агитаци рабочисен класлă ăнланулăхне ваççатнă тата социалисăм идейисене сарассин пуçламĕшĕ пулнă.

Çав литературăн çитĕнĕвĕ пысăк пулнă. Кĕске срук хушшинчех листовкăсене Петербургри рабочисем хапăл тума пуçланă, листовкăсем стачкăлă кĕрешĕве организацилекен чаплă вăй пулса тăнă. Малтанхи листовкăна Ленин çырса кăларнă. Вăл хăйех алпа çырнинчен машинкăпа тăватшар екземпльар туса çырнă та Бабушкина Семйанниковски савăт таврашĕнче салатма хушнă. Икĕ листовки администраци аллине лекнĕ, иккĕшне рабочисем алăсем тăрăх йанă. Унчухне çакă вăл пысăк çитĕвÿ шутланнă.

Анчах листовкăсене кăларассипе вĕсене салатас ĕç часах йĕркеленсе çитнĕ. 1896 çулта май уйăхĕнче кăларнă листовкă, —ăна та Ленин çырнă пулнă,—икĕ пин екземпльар 40 савăтра саланнă. „Правитĕлствă вестникĕнче" унчухне социал-демократсен ĕçĕ çинчен, „усал шухăшлă личнăçсем" çинчен пĕлтерни пичетленсе тухнă, çав çулте асăннисем Петербургри 1896 çулта пулнă стачкă вăхăтĕнче „тĕрлĕрен содержанилĕ 25 листок пичетлесе кăларнă".

Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" кăларнă массăлă листовкăсем рабочи класа политикă тĕлĕшĕнчен вăратас çĕрте пысăк вырăн йышăннă. „Патша правитĕлствине" йатлă листовкăра (ăна 1896 çул вĕçĕнче тĕрмере лартнă чухне çырнă) Ленин рабочисем листовкăсене йеппле йуратса вулани тата вĕсене йепле харăссăн илни çинчен каласа парать, вăл листовкăсенче рабочисен економикăлă нушисем çинчен çеç мар, тата вырăс граждăнĕсен правасăрлăхĕ çинчен те тата правитĕлствă тискерлĕхĕ çинчен те каланă. Пĕтĕм вырăс пурнăçĕ рабочисене çакна кăтартса панă: „вĕсен хапрăк хуçисене хирĕç пуçарнă вăрçă,—тесе çырнă Ленин,—çавăн пекех пурпĕрех правитĕлствăна хирĕçле вăрçă пулмала. Социалиссен çакна çирĕплетсе листовкăсенче пичетлесе кăларасси çеç йулнă".

Сойуз влийанине массăсенче вăйлатма тата ăна организаципе идейă тĕлĕшĕнчен çирĕплетме Ленин социалисăмлă „Рабочее дело" хаçат кăларма тытăннă. Ленин хаçатăн пĕрремĕш номĕрне пичетлеме хатĕрлесе те хунă пулнă, анчах 1895 çулта Ленина тата ытти „стариксене" арĕсленĕ чухне хаçат вальльи пухнă материалсем полици аллине лекнĕ. „Çапла вара çакă, йăнăшмастпăр пулсан, „90-мĕш çулсенчи вырăс социал-демокрачĕсен „пирвайхи опычĕ",—çырнă Ленин хăйĕн „Что делать?" йатлă геннилĕ кĕнекинче,—вырăнти—ансăр хаçат мар, унтан та ытларах „економикăлă" характерлă хаçат мар, стачкăлă кĕрешĕве самодержавине хирĕç революцилĕ йухăмпа çыхăнтарма тăрăшнă тата реакцилĕ мракобеси политики айĕнче хĕн-хурта пурăнакан халăхсене социал-демократи йенне йавăçтарма тăрăшнă хаçат пулса тăнă" (Ленин, т. IV, стр. 385).

Ленинла пĕрремĕш хаçат, политикăлă агитаци оргăнĕ тата Петербургри „Союз борьбы" тавра социалисăмăн аслă идейĕсене пропагандăламали оргăн тума шутласа хунăскер, полици ăна хыттăн йĕрленĕ пирки тухма пултарайман. Анчах та тепĕр 6 çултан ленинла „Искра"-ран революци кĕрешĕвĕн вут-çулĕмĕ йалкăшма пуçланă.

Ленин çав çулсенче пролетарисен чаплă группине хăй вĕрентсе ÿстернĕ, вĕсене революцилĕ теорийе вĕренсе алла илме пулăшнă. Ленин йертсе пынă кружоксенчен пĕринче ултă рабочи вĕреннĕ. Лектăр заньатисене çапла ирттереччĕ: вăл „час-часах пирĕн хушăмăрта тавлашу пуçласа йама, йе тепĕрне хирĕç тавăрса калаттарма тăрăшатчĕ, çапла йĕкĕлтеччĕ те вара çав ыйту çине тепĕри тĕрĕс пăхнă иккенне кăтартса пама хушатчĕ,—тесе çырать хăйĕн асаилĕвĕнче кружокра вĕреннĕ Бабушкин.

Çав лекцисем пире харпăрхăй теллĕн ĕçлеме, материал тупма, вĕрентрĕç". 1895 çулта Ленина арĕсленине хирĕç ответлесе увăн ученикĕ Бабушкин хăй тĕллĕнех хăйĕн пĕрремĕш листовкине çырнă. Листовки „Что такое социалист и политический преступник" йатлă пулнă.

„Тăван йулташсем, йепле-ха йăвăр туйăнать, епĕр хамăр аталанăвра пит те айалта тăратпăр,—çырнă Бабушкин.—Пирĕнтен нумайăшĕ социалисăм мĕн пулнине те ăнланса илеймеççĕ вĕт-ха". Бабушкин социалиссем камсем пулнине тата мĕншĕн вĕсем хапрăк хуçисене тата правитĕлсвăна хирĕç кĕрешме чĕннине рабочисене ăнлантарса панă.

Рабочисем хушшинчен рабочисен йухăмĕн руководитĕлĕсем пулса тухни Ленин Петербургри „Союз борьбы" çулĕсенче социалисăма рабочисен йухăмĕпе çыхăнтарас тĕлĕшпе пуçланă ĕçĕн тÿрĕмĕн тунă результачĕсем пулнă.

Вуншар рабочисем социалисăмлă пропагандăпа агитацине хăйсемех туса пынă, хуласем тăрăх кайса çÿресе, унта Петербургри „Союз борьбы" примерĕпе рабочисен организацийĕсем тунă.

90-мĕш çулсем варринче марксисла организацисем Закавказйере пула пуçланă. Тифлисра революцилĕ ĕçе Сталин, Кецховели тата Цулукидзе йулташсем пысăккăн туса пынă. 1894 çулта Мускавра „Рабочий союз" организациленет. Дон-çи-Ростовра, Йекатеринославра, Кийĕвра, Николайĕвра, Тулара, Самарта, Хусанта, Орехово-Зуйĕвра тата ытти хуласенче те социал-демократла сойузсем ÿссе çитĕнеççĕ.

Ленин парти тăвас тĕлĕшпе тунă ĕçсене хирĕç оппортуниссем вăл çулсенчех хирĕç тухнă. Ленин вăл вăхăтрах народниксемпе кăна мар, тата анчах çуралакан економисăмпа та калама çук хыттăн кĕрешсе пынă. Економисăм хыççăн каьакансем вырăс марксисĕсен ретĕнче оппортунисла пĕрремĕш группă пулса тăнă. „Союз борьбы"-н хăшпĕр участникĕсем рабочисене економикăлă кĕрешÿ кăна туса пыртарасшăн тăрăшнă, социалисăм идейисене тата политикăлă кĕрешĕве сарма чăрмантарса тăнă. Бабушкин листовкине оппортуниссем хирĕç тăнă, мĕншĕн тесен вăл листовкăна политикăлă темăпа çырнă пулнă. Оппортуниссем унчухнех ĕнтĕ централизацилĕ руководствăна тата дисциплинăна хирĕç кĕрешнĕ. Ленин хăйĕн „Детская болезнь „левизны" в коммунизме" йатлă кĕнекинче аса илет: пролетарилĕ партине тумали большевикла принципсем çине оппортуниссем тунă малтанхи тапăнусем шăпах ĕнтĕ „1895 çулта пулнă, унчухне формальнă парти пулман, анчах та Питĕрте тĕп группă йĕркеленме пуçланă, вăл районри группăсене йертсе пырассине хăй çине илмеле пулнă". (т. XXV, стр. 190).

Петербургри «Союз борьбы»-н революцилĕ опычĕ çине тайăнса, Ленин парти тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленĕ, економиссене, марксисла кружоксемпе сойузсене пĕрлештерме чăрмантарса пыраканскерсене, хыттăн çĕмĕрсе тăкнă.

«Ленин калана тăрăх, Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" организаци рабочисен йухăмĕ çине тайăнакан революцилĕ партин чăн-чăн пуçламĕшĕ пулнă, çакăнта пулнă унăн пĕлтерĕшĕ». („ПСК(б)П Историйĕ").

Б. Лейбзон.

Çĕмĕрле хулинчи совет интеллигенцийĕ

Лайăххисен опычĕпе усă курмала

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановлени хыççăн совет интеллигенцийĕ марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла çавăрса илес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлеме пуçларĕ. Паллах, хăйсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе интеллигенци малтан та ĕçленĕ, марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшалланма тăрăшнă, анчах вĕсене пулăшакан пулман.

— Учителсем аслă шкулсенче вĕренсе тухнă çынсем, пулăшу кирлĕ мар вĕсене,—тетчĕç пире хăшпĕр руководителсем. Ку пĕр йенчен, тепĕр йенчен тата пире общĕствăлă ĕçе йăвăçтарман.

Парти Тĕпкомĕ интеллигенципе ĕçлессине вăйлатма татăклă çул кăтартса пачĕ. Большевисăмпа хĕçпăшалланас тĕлĕшпе пире пулăшу парасси çинчен нумай калаçаççĕ. Калас пулат, вăл ĕçе тума тытăнмалипех тытăнман пулин те хускану пур, ĕçĕн пуçламĕшĕ пур: интеллигенцин канашлăвĕсене туса ирттереççĕ, пирĕн ĕçсемпе, пирĕн пĕлÿсемпе ытларах интересленме пуçларĕç. Ку çеç çителĕклĕ мар, пире конкретлă, практикалă пулăшу кирлĕ.

Мĕн куратпăр-ха епĕр халĕхи вăхăтра? Учителсем марксисла-ленинла литературă ытларах туйанма тăрăшаççĕ, Марксăн, Енгельсăн тата Ленинпа Сталинăн сочиненисене питĕ илесшĕн. Анчах кунта пирĕн КОГИЗ-а вăрçма тÿрĕ килет. [illegible] ĕçлет. Маркс, Енгельс, [illegible] лин кĕнекисене тупма хĕн.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тухни калама çук пысăк пулăшу парат. Учителсем вăл кĕнекене пурте туйаннă. Нумайĕшĕ пикенсе вĕренме пуçланă, хăшĕсем 2—3 сыпăка,теприсем 3—4 сыпăка конспект туса, вуласа тухнă. Епĕ хам та пит пысăк интереспа, тăрăшса вулатăп, анчах пирĕн пĕр-пĕрин хушшинче сыхăну çук-ха. Ман шутпа пирĕн вăхăчĕ-вăхăчĕпе пĕрле пуçтăрăнса, ăнланайман ыйтусем çинчен сÿтсе-йавмала, пĕр-пĕрин опычĕпе усă курмала. Ушкăнлă вуласем туса ирттермеле, ыйтусене ответ памала. Мĕнле вуласан аван тарах? Мĕнле вĕренме çăмăлтарах? Çавăн çинчен районри хаçат çине çырмала, анчах ку таринччен ăна туман, кам мĕнле вĕренсе пыни çинчен пĕлместпĕр. Пĕр-пĕрне пулăшмастпăр. Ку лайăх мар йапала, малашне ку çитменлĕхе пĕтермеле.

Султайĕв.

Кирăв йачĕпе тăракан вăтам шкулти учител.

Çĕмĕрле хули

Вăтăр çул кайарах халĕ Çĕмĕрле хули ларакан вырăнта сĕм вăрман пулнă, çурт тавраш нимĕн те пулман. Çирĕм çул кайала—чукунçул станци тата 3—4 çурт пулнă.

Халĕхи вăхăтра Çĕмĕрле хулинче 20 пин çынна йахăн пурăнат. Унта икĕ савăт, пĕр комбинат. Вăтам шкулсем—2, туллимар вăтам шкул—1. Çитĕннисен шкулĕ, 2 рабфак, 2 ФЗУ. Вĕсенче пурĕ—4 пине йахăн вĕренекенсем. Учителсем 112 çын.

Инженерсемпе техниксен, тата ытти служăшчисен хисепĕ 400 çынна йахăн. Агрономсем—14 çын. Врачсем—18 çын т. ыт. те.

Интеллигенци хисепĕ питĕ пысăк хăвăртлăхпа ÿссе пырат. Тĕрлĕ курссенче, кружоксенче тата хăйсем тĕллĕн вĕренекенсене шутласа та кăларма çук.

Комбинатра çеç пĕр çул хушшинче 273 çын тĕрлĕрен курссенче вĕренсе тухнă.

Тăрăшса вĕренни кирлĕ

Епĕ врач пулса виççĕмĕш çул ĕçлетĕп ĕнтĕ. Нумайах та пулмаст, 7—8 çул кайала епĕ чукунçул çинче чернорабочи пулса ĕçленĕ, манăн ун чухне нимĕнле квалификаци те çукчĕ. Совет влаçĕ мана çын турĕ.

Халĕ епĕ ачасен консультацийĕнче ĕçлетĕп, Ман патăмра прийомра кашни кун ачалă арăмсем хăйсен ачисене илсе килеççĕ, ачисене йепле пăхса ÿстерессисинчен канаш ыйтаççĕ. Паллах ĕнтĕ, кашни ĕçрех, кашни професçирех хамăр пĕлĕве, политикалă пĕлĕве ÿстерни кирлĕ. Марксисăм-ленинисăм теорийĕпе кирлĕ таран хĕçпăшалланмасан, общĕствăлă ĕçре йуравлă çын пулмă йăвăр. Çавăнпа епĕр, врачсем, вĕренме тăрăшатпăр.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" учебникĕ магазина килсенех черет тăрса илтĕмĕр. Халĕ епĕ вулама тăрăшатăп. Вулама аван, ăнланмала чĕлхепе çырнă. Паллах ĕнтĕ, „вулама çăмăл" тени вăл кĕнекене пĕр хут вуласа тухнипех вĕренме пулат тенине пĕлтермест. Тăрăшса, тимлĕн вĕренни кирлĕ, кĕнекепе ĕçлеме пĕлни кирлĕ, конспектсем çырма пĕлес пулат. Çак ĕçре пире пулăшу кирлĕ, анчах вăл пулăшăва епĕр курмастпăр-ха. Ку ĕçе халех организацилемеле.

Совет интеллигенцине большевисăмпа хĕçпăшаллантарсан, унăн пĕлĕвне тата çÿлерех сыпăка хăпартсан, ун çине парти хушнă пек тĕрĕс пăхсан, ăна тăтăшах пулăшу парса пырсан вăл тата активлăрах пулĕ.

Хаяйĕвă.

Ачасен консультацийĕнче ĕçлекен врач.

Ĕçре ÿснĕ маçтăрсем

[illegible] натра çĕнĕ çынсем—стахановецсем, маçтăрсем, бригадирсем çĕршерĕн ÿсе çитĕнчĕç.

Кирилл Йеремейĕв йулташа урапа цехĕнчи рабочисем кăна мар, пĕтĕм комбинат пĕлет. Вăл çулталăк ĕнтĕ сменă маçтăрĕ пулса ĕçлет. Вăл маçтăр йатне чылай çулсем хушшинче тĕрлĕ кружоксенче, курссенче вĕренсе тăрăшса ĕçленипе илнĕ.

Çулталăк хушшинче Йеремейĕв йулташ хăйĕн сменине малта пыракансен ретне кăларчĕ. Унăн смени кăçалхи çулталăк планне нойабĕр уйăхĕнчех тултарнă. Сменă лайăх ĕçленине тата çак фактсем те аван кăтартса параççĕ: сменăра 26 рабочи, вĕсенчен стахановецсемпе ударниксем 20 çын ытла, нормăна тултарайманнисем пачах çук. Акă торцовщицă А. Ниткина йулташ кашни кунах 8 800 штук паркет йакатас вырăнне 18—19 пин штук йакатат, Г. Айучатăвă, Т. Волкăвă йулташсем нормăна йаланах 200—400 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

[illegible] лă метр паркет кăларса плана 250 процент тултарат.

Столярнăй цехри машиннăй залра сменă маçтăрĕ пулса комсомолец Григорий Васильĕв ĕçлет. Вăл та çамрăк специалист, çак çулта çеç маçтăрта ĕçлеме пуçланă. 1931—33 çулсенче хапрăк-савăт шкулĕнчен вĕренсе тухсан вăл виçĕ çул хушши тĕрлĕрен станоксем çинче ĕçлет. 1936 çулта ăна технически прийомщике лартаççĕ. Ку вырăнта пĕр çул ĕçлесен Васильĕв йулташа маçтăрсен курсне вĕренме параççĕ. Çав курсран вĕренсе килнĕ хыççăн, çулталăк ытла ĕнтĕ вăл маçтăрта ĕçлет. Вăл йертсе пыракан сменă та материал çителĕклĕ пулсан йаланах нормăна тултарса пырат.

Васильĕв йулташ сменинче мухтава тухнă çынсем ĕçлеççĕ. Акă торцовальнăй станокпа ĕçлекен работницă Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Верă Каçăвавă çуллахи вăхăтра нормăна 400—500 процент ытла тултарса ĕçленĕ т. ыт. те.

Хар. Лисин.

Совет инженерĕн марксисăм-ленинисăм теорине алла илмеле

Большевисăма вĕренсе алла илмесĕр таврара пулса пыракан событисене тарăнăн ăнланма тата производствăна тĕрĕс организацилесе йертсе пыма май çук.

Иулашки вăхăтчен марксисăм-ленинисăма вĕренесси кирлĕ пек пулса пыман. Вĕренÿ ĕçне кружоксем урлă çеç туса пыни пысăк чăрмав пулнă. Парти историне вĕренмели кружоксене парти членĕсемпе кандидачĕсене кăна йаваçтарнă. Партире тăман инженерсем, техниксем чылайĕшĕ вĕренÿ тулашĕнче йулнă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакцилесе кăларнă „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" интеллигенци аллинче большевисăма алла илмели хĕçпăшал пулса тăрат. Çак кĕнекесене, çавăн пекех Ленин—Сталин çырнисене тарăнăн вĕренсе пыма методикле тата организацилĕ кăтартусем те пур.

Комбинатри инженерсемпе техниксем тата служăшчисем чылайĕшĕ ПСК(б)Парти историне хăйсем тĕллĕн вĕренме пуçăнна. Вĕсен шутĕнче парти членĕсем Йегорăв, Шереметйĕв, Урукăв, партире тăманнисемпе комсомолецсем: Мосолов, Шустăв, Кусакин, Карпăв т. ыт. йулташсем те. Епĕ халăхи вăхăтра „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тата Плехановăн „К вопросу о развитии монистического взгляда на историю" йатлă кĕнекене вулатăп.

[illegible] илес текенсем çав тери нумай, сут-илÿ организацисем нийепле те кирлĕ таран илсе килсе ĕлкĕреймеççĕ.

Пирĕн комбинатра халĕ парти историйĕ, марксисăм-ленинисăм теорийĕн ыйтăвĕсем тăрăх час-часах калаçусем туса ирттереççĕ. Комбинатăн халĕхи вăхăтри ĕçĕсем çинчен сÿтсе-йавнă чухне тухса калаçакансем политикăпа çыхăнтараççĕ.

Анчах кусем çителĕксĕр-ха. Вĕренĕве тата лайăхрах организацилес тесен тумалисем татах та нумай.

Çак çитменлĕхсене часах пĕтерме май пур.

Çĕмĕрле хулинчи интеллигенци парти райкомĕнчен квалификацилĕ консультаци, лекцисем организацилессе тата марксисăм-ленинисăм классикĕсен произведенисене вĕренме йăтарласах библиотекă йе вуламали зал уçасса кĕтет.

Г. Петров.

Çĕмĕрле комбиначĕн технически директорĕ.

Резинăрăн йапаласем тăвакан Шупашкарти савăт строительствинче.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Грузчиксен Потапăв йулташ йертсе пыракан бригади нормăна 240—250 проц. тултарса ĕçлет. Сулахайран сылтăмала: И. К. Скрйабин, М. И. Скрйабин, Н. Й Потапăв, А. Н. Иаршов, А. Н. Митрофанăв тата Ф. С. Иапайĕв йулташсем.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Социалисăмла ĕç дисциплинишĕн!

В. И. Ленин хăйĕн „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле" йатлă статйинче — ăмăрту ĕççыннисен анлă массисен творчĕствăлă хастарлăхне çĕклемели вăй пулса тăрат, тесе кăтартса панă. Социалисăмлă ăмăрту йалавне çĕклесе совет ĕççыннисем пĕррремĕшпе иккĕмĕш пилĕкçуллăх планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Социалисăмлă ăмăрту ĕççыннисен мĕлйуншар массисен творчĕствăлă вăйне аталантарса пымали, ĕççыннисене ĕç çине социалисăмла пăхма вĕрентмели шкул пулса тăчĕ. Вăл ударниксемпе стахановецсене сурăтрĕ. [illegible] дисциплинине çирĕппĕн тытса пыракан çынсем. Вĕсем ĕçкунĕпе туллин усă курса ĕçтухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Производствă интересĕшĕн, çĕршыв интересĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăйсен ĕçĕпе ударниксемпе стахановецсем производствăра большевикла организацилĕх, культурлăх тума, государствă планĕсене ăнăçлăн тултарса пыма пахă тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ. Вĕсем пек ĕçлеме пĕтĕм коллектива вĕрентни,социалисăмлă ĕç дисциплинине çирĕплетсе пымали майсенчен пĕри пулат.

Социалисăмлă ĕç дисциплинине çирĕппĕн тытса пыма рабочисене воспитани парас ĕçе организацилемеле тата прогулщиксемпе, летунсемпе хаярран кĕрешсе пымала.

Тÿрех калас пулат, ку таранччен предприйатисенче ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç тивĕçлĕн кĕрешсе пыман. Партипе профсойуз тата комсомол организацисем, çавнашкалах руководителсем ĕç дисциплинине пăсакансене, прогулщиксене, летунсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларса вĕсен киревсĕр ĕçне пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Канашри вакунсем йусакан савăтра кăçалхи иййунь уйăхĕнче кăна 594 ĕçкунĕ прогул пулнă. Ку пĕтĕм ĕç хисепĕнчен икĕ процентĕ шутланат. Кунта прогулсен хисепĕ халĕ те сахал мар-ха. Кунашкал пулни руководителсем, партипе комсомол организацисем тата профсойуз комитечĕ ĕç дисциплинине пăсакансем çине килĕшÿлĕ пăхнипе кăна пулма пултарнă.

Ĕç дисциплинине пăсни предприйати ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем тăват. Уйрăм рабочисем прогул [illegible] тултарасси те ăнăçлăн пулса пымаст.

Социалисăмлă ĕç дисциплинине çирĕплетесси пĕтĕм халăхăн государствă ĕçĕ пулса тăрат. Партипе комсомол тата профсойуз организацисен вăл йенĕпе куллен тимлĕн ĕçлесе пымала. Малта пыракан рабочисене—стахановецсемпе ударниксене ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç кĕрешме организацилемеле. Вĕсен опычĕпе пĕтĕм рабочисен коллективне ĕç çине социалисăмла пăхма вĕрентмеле.

Социалисăмла ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе хапрăк-савăтсенчи хаçатсем тата стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен лайăх опычĕсене тĕплĕн çутатса пани урлă рабочисене дисциплинăна çирĕп тытса пыма вĕрентмеле. Прогулщиксене, летунсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăлармала. Вĕсене пулăшакан руководителсене хытăн критиклемеле. Пĕтĕм массăна çирĕп ĕç дисциплинишĕн кĕрешме мобилизацилемеле.

Çитес çуракине большевикла хатĕрленер

ПАТĂРЙЕЛ. Хирти Сĕнтĕр йалсоветĕнчи „Трактăр" колхоз çитес çуракине питĕ йапăх хатĕрленсе пырат. Колхоз председателĕ Антонăв йулташ 1939 çулта çирĕп тухăçлă тырпул туса илме кирлĕ ĕçсене тума колхозниксене мобилизацилемен. Çав вăхăтрах, Антонăв йулташ районри организацисем умĕнче мухтава тухас шутпа туман ĕçсенех тунă тесе çĕрĕç пайне сводкăсем пама тытăннă. Çав сводкă тăрăх „Трактăр" колхоз, пĕтĕмĕшпе илсен, çитес çуракине хатĕрленсе çитнĕ пек курăнат. Чăннипе, ĕçсем пачах урăхла. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмеле тăвасси çинчен йышăннă постановленире „колхоз правленийĕсене 1939 çулхи хĕллепе çуркуннехи вăхăтра тислĕк запасĕсене пĕтĕмпех çĕртме уйĕсене турттарма, çав вăхăтрах тата вырăнти ытти удобренисемпе те—торф т. ыт. те"—усă курма хушса хăварнине „Трактăр" колхоз правленийĕ пурнăçа кĕртме тытăнман. Çавăн пекех, 1938 çулти декабĕрĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр уйра йур тытма кирлĕ хатĕрсене йăлтах хатĕрлесе çитермеле пулнă пулсан, халĕ те хатĕрлеме тытăнман.

Буденный, Шмидт йачĕпе тăракан колхозсенче те çитес çуракине хатĕрленес йенĕпе сахал ĕçлеççĕ. Шмидт йачĕпе тăракан колхоз хĕллехи вăхăтра йур тытса йулма щчитсем туса хатĕрлемен. Йалхуçалăх машинисене çак кунсенче çеç йусама тытăнчĕç. Вăрлăхсене трийер витĕр кăларса тасатман т. ыт. те.

Районра çитес çулхи вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешекен колхозсем те сахал мар. Акă „Комбайн" колхозах илер. Вăл колхозра икĕ çейалкă, 14 плуг, 20 сÿре йусаса вĕсене бригадăсем çумне çирĕплетсе панă. Вăрлăхлăх тырпулсене суртласа уйрăм кĕлете хунă, пурĕ селĕ 131 центнĕр, тулă 40 центнĕр, пăрçа 8,40 центнĕр, йасмăк 5,20 центнĕр, викă 8 центнĕр, кантăр вăрри тата вир вăрлăхĕсене тасатса хунă.

Пайанхи тĕп задачă вăл—вăйлă тырпулшăн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне тултарасси шĕн тата вĕсен продуктивлăхне ÿстерессишĕн кашни колхозрах социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пырасси пулат.

В. Петров

ЦЕХ НАЧАЛЬНИКĔ

Малтан епĕр ун патĕнче цехра пултăмăр. Елĕкрех ку цеха аван цех тетчĕç, халĕ çемçе пукансем, дивансем тума хатĕрленнĕ пирки çемçе пукансем тăвакан цех теççĕ. Цехра ĕлĕкхи пек машинăсем хыттăн шавлани илтĕнмест.

— Çĕнĕ станоксене вырнаçтарса пĕтеретпĕр ĕнтĕ,—терĕ пире, кулкаласа, цех начальникĕ Мосолов йулташ.—Ĕлĕк кунта тусан тухатчĕ, шлифовальнăй станоксем шавланипе çынпа калаçни те илтĕнмесчĕ...

Сăн-питне пăхсассăн ăна никам та çак савăт пек пысăк цехăн начальникĕ тесе калас çук. Вăл ахаль те çамрăк та сăн-сăпачĕпе татах та çамрăкрах пек туйăнат. Унăн хăмăр куçĕсем йăвашшăн выляса кулаççĕ. Вашават сассинче большевикла скромнăç сисĕнет. Сăпайлăх теме пулат чăвашла, вăл кĕçĕнтерех çын пек кăтартма тăрăшнинчен килет, анчах вăл пысăк цех начальникĕ, ун цехĕнче 500 çынна йахăн ĕçлет. Унччен маларах вăл çав цехрах техноруку пулса ĕçленĕ. Халĕ нумай пулмаст (иййулĕн 26-мĕшĕнче) вăл лайăх ĕçленине кура, ăна цех начальникне куçарнă. Биографийĕ унăн интереснă, çавăнпа кĕскен каласа кăтартăпăр.

Н. М. Мосолов йулташ 1910 çулта, Илебар йалĕнче (халĕ Сĕнтĕрвăрри р.) çуралнă. Пысăк çемйене 11 çын тăрантарса усрама çăкăр çитмен пирки унăн ашшĕ Атăл пристанĕсенче матрос пулса ĕçленĕ. 1927 çулта вăл ăш чирĕпе чирлесе вилнĕ хыççăн Кольă вата амăшĕпе тата пĕчĕк шăллĕсемпе тăрса йулнă. Амăшĕ 1929 çултанпа колхозра тăрат, ватă пулсан та (65 çулта) ĕçлеме тăрăшат.

1931 çулта Мосолов йулташ Сĕнтĕрвăрринче вăрман техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Çĕмĕрле комбинатне килсе кĕрет. Комбинатран Хĕрлĕ Çара кайат, Хĕрлĕ Çартан килнĕ хыççăн вăл татах комбината ĕçлеме кĕрет.

— Мана комсомол çын турĕ,—тет вăл иртнĕ çулсене аса илсе.—Комсомол вĕрентрĕ, комсомол ура çине тăратрĕ, йăвăр вăхăтра комсомол пулăшу парса тăчĕ.

Комсомол ретĕнче Мосолов йулташ 1927 çултанпа тăрат. Халĕхи вăхăтра пропагандист пулса ĕçлет.

...Унăн кабинетĕнче пуканпа диван деталĕсем, тĕрлĕ моделсем нумай. Халиччен цех пĕрмай ĕçленĕ, авса тăвакан пукан хатĕрленĕ. Халĕ урăх тĕрлĕ, çĕнĕ продукци кăларма пуçлат, çавăнпа маçтăрсем, станочниксем хатĕрлеме курссем уçнă, унта 82 çын вĕренеççĕ.

— Цех ĕçлеме пуçласан питĕ интереснă пулат,—тет вăл йăвашшăн кулкаласа,—халĕ, куратăр, вăн, станоксене улăштаратпăр. Ĕç нумай, питĕ нумай ĕç. Ĕнер комбинат управляйушчийĕпе М. А. Шаликăв йулташпа çурçĕрччен канашласа лартăмăр. Станоксене тĕрĕс монтажласси ответлă ĕç. Малашне цех мĕнле ĕçлесси унтан та килет,—хушса хурат вăл.

Пирĕн унтан ыйтса пĕлмелисем питĕ нумай, анчах ăна ĕç вăхăтĕнче кансĕрлеме, чăрмантарма аван мар пек. Сменă пĕтнĕ хыççăн ун патне хватерне пыма пултăмăр.

* * *

Инженерсемпе техниксем, урăхла каласан, комбинатăн интеллигенцийĕ хăйсем тунă икĕ хутлă çуллĕ, пысăк çуртсенче пурнаççĕ. Çуртсене пăс вăйĕпе ăшăтаççĕ. Çуртсенче ваннăсем тата ытти удобствăсем. Мосолов йулташ çавăнта пурăнат.

Çап-çутă таса та пысăк хватер. Шкапĕ, сĕтелĕ, етажерки, пуканĕсем, електричĕствă сути ÿкнипе йăлтăртатса тăраççĕ. Етажеркă çинче кĕнекесем чылай. Епĕр парти Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тухнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановлени пирки сăмах пуçартăмăр.

— Вăл историлĕ постановлени,—тет Мосолов йулташ каллĕ-каллĕ утkаласа,—парти пропагандине ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе питĕ пысăк, калама çук пысăк пулăшу пачĕ пире. Большевисăма вĕренсе алла çавăрса илес тĕлĕшпе çĕнĕ çул уçса пачĕ. Епĕ ĕлĕк кружокра вĕреннĕ. Мĕнле иртеччĕç-ха кружокра занятисем? Вăхăтра пуçтарăнмасчĕç, лайăх лектăрсем çукчĕ. Начар лектăр вулани пуçа та питех кĕмест. Епĕ ун чухнех кĕнекесем тăрăх килте вĕренме тăрăшаттăм, анчах, литературă çителĕклĕ марччĕ.

Заочнăй институтра пĕр çул вĕрентĕм. Акă ун чухнехи конспектсем,—илсе кăтартат вăл конспектсене.—Питĕ тăрăшса вĕренĕттĕмччĕ, анчах ун чухне «ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ» пек учебниксем çукчĕ. Халĕ истори кĕнеки пур, мĕнле вĕренмели меслетсене те кăтартса панă. Мухтанса каламастăп: епĕ пушă вăхăтра кĕнекесемпе ларма, вулама, вĕренме питĕ йуратататăп. Халĕ ытларах та. Йепле йуратса вулас мар çак кĕнекене!—тет вăл кăвак хуппăллă „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" аллине илсе. Куçĕсем савăнса кулаççĕ унăн, пĕтĕм сăн-пичĕ савăнăçпа çуталнă. Вăл пĕр главине тупат, татах тепĕрне тупса кăтартат.

— Марксисăм-ленинисăм енциклопедийĕ вĕт ку, вулама пуçласан чарăнма çук, вулас килет. Акă,—тет вăл тетрачĕсене кăтартса,—акă 4-мĕш главине конспект турăм. Вулама çăмăл, ăнланмала чĕлхепе çырнă, çав тери интереслă, калама çук усăлă...

Ахаль чухне нумай сăмахлама йуратман Мосолов йулташ, хăйĕн хаваслă шухăшĕпе хĕрнĕçемĕн хĕрсе, калас шухăшĕсене пурне те каласа пĕтерес шутпа, васкаса, хумханса калаçма пуçларĕ.

Пирĕн калаçу производствă çине куçрĕ. Мосолов марксисăм-ленинисăм теорине пĕлни ĕçре, производствăра мĕнле пысăк усă пани çинчен калама пуçларĕ.

— Мана час-часах рабочисем хушшинче доклад тума тÿрĕ килет, епĕ пĕрмайах рабочисем хушшинче. Пирĕн цехра та стахановецсем, ентузиассем, хастарлă рабочисем питĕ нумай, епĕр ыттисенчен кайа йулса пыман, коллектива хурлама çук пирĕнне, анчах, есĕр хĕвăр та пĕлетĕр, «çемйе чăлахсăр мар» тенĕ ваттисем.

Çемйере кам та пулин «килсе пĕтейменни» пулатех. Цехра, производствăра та çавах. Хăш чухне кахаллăха тĕл пулатăн, ĕç дисциплинине пăсакансем пулкалаççĕ, йе тата патшалăх пурлăхĕ çине „ала хуракансем" те тĕл пулкалаççĕ. Ун пек çитменлĕхсем пĕтмен вĕтха пирĕн, вĕсемпе кĕрешмеле, вĕсемпе пикенсе кĕрешетпĕр, Çавăн чухне Ленинпа Сталин çырнисене аса илетĕп те, астусан сăмахпа каласа паратăп, йе кĕнекисем аллă айĕнче пулсан çав вырăна тупса вуласа паратăп. Ун пеккисем нумай пулкалавă манăн практикăра. Акă, куратăр, мана Ленинпа Сталин çырнисен 3-х томник пур. Час-часах епĕ вĕсемпе усă куратăп, питĕ пулăшаççĕ мана вĕсем. Нумай пулмаст манăн стахановла йухăм çинчен доклад тумала пулчĕ. Сталин каланисем мана çав тери пысăк пулăшу пачĕç. Йе ĕç дисциплини çинчен каласа ăнлантарнă чухне Ленинпа Сталин ун пирки мĕн çырнисене аса илетĕп, вуласа паратăп. Ĕç дисциплинине пăсакан кăлăхтарах, ÿркенерех ĕçлекен рабочийе пĕрре çапла тĕплĕн ăнлантарса патăм та пысăк çын, сухаллă çын куçĕсене шăлкала пуçларĕ. „Айăплă епĕ, хам тĕттĕм пирки айăплă, урăх апла пулмастăп, Ленин хушнă пек тăрăшса ĕçлетĕп" тет.

Марксисăм-ленинисăм теорийĕ, большевисăм теорийĕ пире ĕçре, кашни утăмрах пулăшат, çул кăтартса парат. Çавăнпа та кашни интеллигентăн, кашни рабочин, кашни ĕççыннин вăл хăватлă теорийе—большевисăма вĕренсе алла çавăрса илме тăрăшас пулат, унсăр пуçне нихăш ĕçре те йертсе пыма йăвăр.

Сергей Йалавин.

Хĕрлĕ Çар — çамрăксемшĕн пысăк шкул

Хĕрлĕ Çар ретĕнчи çамрăксем политикăла пысăк шкул витĕр тухаççĕ. Вĕсем пĕррремĕш класлă çар техникине вĕренсе алла çавăрса илнипе пĕрлех большевисăма тимлĕн вĕренсе пыраççĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтра ĕçленĕ Артизанăв йулташпа Вăрнар районĕнче колхоз бригадирĕ пулнă Михайлăв йулташ №-ски çар чаçĕнче пур йенĕпе те отличнă вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарта комсомол ретне кĕчĕç.

Комсомолăн Çĕмĕрле райкомĕнче ĕçленĕ Храмăв йулташ политрук заместителĕ пулса ĕçлет, ăна парти ретне илчĕç. Çак йулташсем Хĕрлĕ Çара килнĕренпе политикă тĕлĕшĕнчен нумай ÿсрĕç.

Чăваш республикĕнчен килнĕ çамрăксем вуникĕ çын полк шкулĕнчен вĕренсе тухса, кĕçĕн командирсем пулчĕç. Çамрăк командирсем Хĕрлĕ Çар 21 çул тултарнă тĕле хăйсен отделенийĕсене малти рете кăларассишĕн ăмăртаççĕ.

Политрук заместителĕ

Биктимирăв.

Пољшăпа Германи чиккине Пољшă çарсем илсе пырат

Англи хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, йулашки кунсенче Тешин облăçне Пољшă салтакĕсем 50 пин çын таран пырса çитнĕ. Тешин облăçне çар лагерĕ туса хунă. Салтаксемсĕр пуçне тата çар снарйаженисем нумай илсе пынă, вăл шутра, йывăр артиллери. Богумин районĕнче Пољшăпа Германи чиккинче зенитнăй орудисем лартса тухнă. Çÿлĕ çуртсен крышисем çине пулеметсем лартса тухнă. (ТАСС).

— О —

Францире рабочисене хирĕç репреççисем туни

Францире предприйати хуçисемпе правительствă ноябрĕн 30-мĕшĕнчи забастовкăна хутшăннă рабочисене хирĕç репреççи тăвасси халĕ те çаплах пырат. Франции компарти хаçачĕ „Иумаците" пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр департаментĕнче забастовкăра пулнă рабочисене 150 çын таран тĕрмене тĕрлĕ срукпăха лартмала тунă. Парижри Ренопа Ситроен савăчĕсенчен кăларса йанă рабочисене, 1000 çын таран, çаплах кайала ĕçе илмесĕр тăраççĕ.

Франци компартийĕ Францири пур районсенче те кашни кун нумай йышлă митингсем организацилет. Вăл митингсенче ĕççыннисем чрезвычайнăй декретсене хирĕç, правительствăпа хуçасен репреççисене хирĕç протеслеççĕ.

(ТАСС).

Махоркă çинчен

Кăçал епĕр республикăра махоркă лартса тăвас плана тултарайманăмăр. Ку вăл епĕр начар ĕçленинчен килнĕ. Çитес çулта Чăваш республикĕн тĕштырăсене акса тăвас тĕлĕшпе ĕçленĕ пекех, махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлес пулат. Кăçал чылай колхозсенче махоркă лартса тăвассипе уйрăм бригадăсем уйăрман. çавна май агротехникăпа ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыман Кладбишчă тата Кунакинă колхозĕсенче махоркă калчисене çумкурăксенчен вăхăтра тасатман. Çавăнпа та ку колхозсенче махоркă тухăçлăхĕ начар пулнă.

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те Чăваш республикĕнче махоркă лартса тăвасси çине кирлĕ пек пăхни пулман. Махоркă йĕнĕпе ĕçлекен специалиссене пухса, канашлусем иртермен.

Кăçал махоркă лартса тăвас йĕнĕпе начартарах ĕçлерĕмĕр пулсан, çитес çулта пысăк тухăçлă махоркă туса илессишĕн кĕрешмелле халех пуçарса йарас пулат. Планпа пăхнă чухлĕ махоркăна пĕтĕмпех лартса хăвармала. Ку тĕлĕшпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн махоркă лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен специалиссем хатĕрлес йĕнĕпе çине тăрса ĕçлес пулат. Халь пирĕн колхозсенче ку йĕнĕпе специалиссем питех те сахал тесен те йăнăш пулмĕ.

Махоркă йĕнĕпе тумалли агротехника ĕçĕсене иртерме халех хатĕрленсе пымала. Махоркă вăррине акма парниксем хатĕрлемелле, тислĕк тата ытти минераллă удобренисем пухмала. Махоркăна лаша тислĕкĕ кирлĕ. Çавăнпа та лаша тислĕкне хайне тĕллĕн, ытти тислĕкпе тата улăмсемпе хутăштармасăр пуха пымала.

Махоркă калчисене лартсан, вĕсене апат памала. Ку тĕлĕшпе селитрă, сернокислăй аммоний, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемелле.

Пирĕн республикăра махоркă лартса тăракан кашни колхозрах уйрăм бригадăсем йе звеносем пулмала. Çавăн пеккисем пулмасан, вĕсене халех тумала. Вара çав бригадăсен, йе звеносен çитес çулта махоркă лартса тума тĕплĕн хатĕрленçе пымала.

Агроном А. Ф. Самойлăв.

— О —

Государствăна тырă сутаççĕ

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Кăçал çанталăк уйар тăчĕ пулин те районри колхозсем лайăх тырпул туса илчĕç. Колхозсен сутлăх та тырпул пур. Туктамăшри „Тырпул кунĕ" колхоз 3 пин пăт, „Трудовик" колхоз 568 пăт тырă сутрĕç. Тырă сутакансене йалпо тĕрлĕрен промышленнăç таварĕсем, йалхуçалăх машинĕсем, тимĕр пăта, машин пайĕсем т. ыт. те кÿрсе парат.

И. Çигайĕв.

ТУРХАН. Аслă Арапуçĕнчи „Хĕрлĕ пайрака" колхоз государствăна 50 центнĕр тырă сутрĕ. Колхозниксем 40 центнĕр сутрĕç.

Н. Горшков.

ШĂХАСАН. Вăрман Йенĕшри „Свобода" колхоз государствăна 24 центнĕр тырă сутрĕ. Тырă сутнă укçапа колхоз йалпо урлă трийер илме договăр тунă.

Н. Свешникăв.

Республикăлă Испанире

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикăлă Испани çарĕн часовойĕ Ебро йуханшывĕ хĕрринче.

(Бюро-клише ТАСС).

Хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ художниксем

Чăваш республикĕнчен хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ художниксем 140 çын шутланаççĕ. Вĕсем ку ĕçе йатарласа шкулсенче вĕренмен пулин те хăйсен ĕçĕсене пысăк маçтăрлăхпа туса пыраççĕ. Вĕсенчен хăш-пĕрисем хăйсем ÿкерне картинăсене Пĕтĕм Союзри художниксен выставкине йарса пысăк премисем илнĕ. Богаткин художник „Чапаев в бою" йатлă картинăшăн Пĕтĕм Союзри художниксен выставкинче 1000 тенкĕ преми илнĕ. Çавăн пекех Йермишин, Филиппăв, Аргантейкин художниксем 1937 çулта пулса иртнĕ республикăри художниксен выставкинче хăйсен талантĕсене лайăх кăтартрĕç.

Хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ художниксем хăйсен пĕлĕвĕсене малалла ÿстерме тăрăшаççĕ. Филиппăв Хусанти художниксен училищине вĕренме кĕнĕ. Художниксен пĕлĕвне ÿстерме Халăх пултарулăх çуртĕ 1937 çулта Шупашкарта изо-студи организациленĕ. Унта 40 художник ытла вĕренеççĕ. Çитес çул çавăн пек изо-студисем Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере организацилеме палăртнă.

Халĕ иртнĕ çултанпах Халăх пултарулăх çуртĕнче ку тĕлĕшпе ĕçлекен методист пулманнипе художниксемпе ĕçлесси пачах чарăнса ларнă. Художниксем ниçтан та пулăшу илменнипе ĕçлеме аптăраса тăраççĕ. Малашне художниксене чăн-чăн пулăшу кирлĕ. Вĕсене ĕçре, вĕренÿре пулăшмала.

Н. Амурцĕв

Кашни колхозăн сат пултăр

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсене çÿресе çавăрнас пулсан, районри 96 колхозран 7—8 колхоз кăна пысăк сатсем ĕрчетнине куратăн. Анчах, вĕсен те, хăшпĕр колхозсен чĕртме пуçланă сачĕсем йуханса кайнă. Сăмахран, Лапруйкассинчи М. Горький йачĕпе тăракан колхозăн 3 гектарлă сат пахчи йапăха кайса пĕтнĕ, 350 улмуççирен 50 улмуççи çеç чĕрĕлеççĕ. Çавăн пекех Пукашри колхозăн та чĕрĕлме пуçланă сат пахчи пăрахăça кайма пуçланă.

Çак асăннă колхозсен председателĕсем сат чĕртессишĕн тăрăшмаççĕ. Ахаљтен мар ĕнтĕ, М. Горький йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулнă Н. Оçипăв улмуççисене хамах пăхатăп тесе хăй çине ответлăх илчĕ те, улмуççи кучĕсене пăрахма турттарса хунă тислĕке хĕвел питĕнче типĕтсе йачĕ. Кĕркунне лартнă улмуççисене хĕл вăхăтĕнче мулкачсем кышласа пĕтерчĕç. Çапла вара, 1 пин тенкĕ патне расхутланă хыççăн сат ахалех пĕтрĕ.

Шуршăл подрайонне 19 колхоз кĕрет, вăл колхозсенчен пĕри те сат пахчи чĕртни çук. Сат дохочĕ питĕ пысăк пулсан та, райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен агрономсемпе руководителсем колхозсенче пысăк сатсем чĕртессишĕн тăрăшмаççĕ. Пирĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсенче пысăк сатсем чĕртмешкĕн тырă акма йурăхсăр сăрт-тайлăмлă çĕрсем темиçе çĕр гектар шутланаççĕ пулсан та, райçĕрĕç пайĕ çак усăсăр выртакан çĕрсем çинче сатсем чĕртессишĕн тăрăшмаст. Сăмахран, Сĕнтĕрвăррипе йунашар ларакан Кукашне колхозĕн сат чĕртме йурăхлă сăрт тайлăмĕ 10—12 гектар пур пулсан та, райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем ку йал виттĕр куллен иртсе çÿреççĕ пулин те, колхозра сат чĕртме шухăшламаççĕ. Çитменнине улмуççисем чĕртекен питомник те ку йалпа йунашар.

Ку çеç те мар-ха, райçĕрĕç пайĕнчи агрономсемпе унăн руководителĕсем хăшпĕр колхозсене нихçан та пырса курмаççĕ. Сăмахран, М. Горький йачĕпе тăракан колхоза райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем колхоз организациленĕренпе те çитсе курман. Аçтан ĕнтĕ вĕсем колхозсенче сатсем чĕртессишĕн тăрăшса ĕçлетчĕр!

Пирĕн кашни колхозра сатсем ĕрчетмеле. Вĕсене лайăх пăхса çулсеренех пысăк тупăш илмеле.

П. Комиссарăв.

ГТО значокĕсем илеççĕ

Чăваш республикĕнчи „Медик" спорт обшчĕстви çамрăк-ха. Çапах ĕнтĕ вăл чылай физкуљтура активне ÿстернĕ. Кăçал 68 çын ГТО значокне илнĕ.

„Медик" спорт обшчĕствин халь 200 мăшар йĕлтĕр пур. Вĕсенчен 120 мăшăрне кăçал туйаннă. Кăçал обшчĕства Шупашкар хулинче хĕрарăмсен хоккей командине организацилет.

Куйбышевски райпишчеторгăн (Мускав) 2-мĕш № магазинĕ заказчиксене кашни уйăхрах киле 50—60 пин тенкĕлĕх продуктăсем пырса парат. Киле таварсем пырса паракан А. В. Колоскова чи лайăх разносчица шутланат.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайра) А. В. Колоскова разносчица, заказ пана продуктăсене киле илсе пынă.

Е. Йавзерихин фото-ÿкерчĕкĕ

(Бюро-клише ТАСС).

Районри хаçатсем тăрăх

** Турхан районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз кăçал кирпĕч туса виçĕ пин тенкĕ тупăш илнĕ. Вăл укçаран 1.500 тенкине колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе панă. („Коммунар")

** Мăн-Шетмĕ (Трак р.) йалĕнче революцичен икĕ пуп тата дийакăнпа псаломшчик пулнă. Халь вăл йалта 12 учител, икĕ врач, фелдшĕр, агроном, зоотехник т. ыт. ĕçлеççĕ. Йалти интеллигенции йышĕ 50 çынна çитет. („Коммунисăм çулĕпе").

Велоçипедсем выљăса илнĕ

Декабĕрĕн 9-мĕш тĕлне Улатăр хулинчи перекет касси Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсем çине тухнă выљăв укçи пурĕ 1405 тенкĕлĕх тÿлерĕ.

Паровозсем йусакан савăтра ĕçлекен Ф. Поликарпăв йултăш 3 тенкĕлĕх билетпа велосипед выљăса илнĕ. Çавăн пекех „Техлессемкультур" кантурĕн управљайушчийĕ Игнатйĕв йултăш та пĕр тенкĕлĕх билетпа велосипед выљăса илнĕ.

Ал. Çеменăв.

* * *

Трак районĕнче çар комиссариачĕ йĕнĕпе ĕçлекен И. Кондратйĕв йултăш Осоавиахим 12-мĕш лотерей билечĕпе 1000 тенкĕ выљăса илнĕ.

И. Х.

ССР Союзĕн Оборонине Тĕреклетмели Государствă Займĕ

Проигрышсăр кăларăм

Выигрышсен тăваттăмĕш тиражĕн справкăлă таблици

Тираж 1938 çулти декабĕрĕн 11-мĕшпе 12-мĕшĕнче Рйазань хулинче пулса иртнĕ.

Выигрыш суммине облигаци хакне те кĕртнĕ.

ССР Союзĕн Оборонине Тĕреклетмели Государствă Займĕн тăваттăмĕш тиражĕнче выигрышсем серисен тата облигацисен çак номĕрĕсем çине тухнă—проигрышсăр кăларăмăн мĕнпур 53 разрйачĕсенче те:

Серисен №№	Облигацисен №№	Выигрыш пысăкăшĕ тенкĕпе	Серисен №№	Облигацисен №№	Выигрыш пысăкăшĕ тенкĕпе	Серисен №№	Облигацисен №№	Выигрыш пысăкăшĕ тенкĕпе
20410	1—50	150	26800	48*)	500	34007	50*)	500
20542	1—50	200	26883	08*)	500	34734	1—50	150
20618	42*)	500	27308	36*)	500	35000	15*)	500
20799	1—50	150	27466	1—50	150	35410	33*)	500
21198	1—50	150	27804	49*)	500	35481	37*)	500
21554	1—50	200	28073	26*)	3000	35564	05*)	1000
21716	39*)	500	28156	23*)	500	35763	07*)	500
21742	13*)	500	28210	15*)	500	35767	42*)	500
21747	43*)	500	28326	19*)	500	35849	1—50	200
21759	1—50	150	28786	1—50	150	36001	31*)	500
21775	02*)	1000	28869	15*)	500	36178	25*)	500
21780	06*)	500	28931	1—50	200	36331	1—50	150
21841	1—50	150	29108	23*)	500	36413	38*)	500
21844	1—50	200	29200	34*)	500	36634	12*)	500
21977	1—50	150	29226	33*)	500	36715	1—50	150
22297	20*)	500	29529	23*)	500	36776	1—50	150
22870	47*)	1000	29985	1—50	200	36929	1—50	200
22880	24*)	500	30279	49*)	500	37237	1—50	200
22889	34*)	500	30548	20*)	500	37406	1—50	200
22898	1—50	150	31024	1—50	200	37533	1—50	150
23258	40*)	500	31813	1—50	150	37690	39*)	500
23725	42*)	500	32081	1—50	150	37979	1—50	200
23940	1—50	200	32345	1—50	200	38023	28*)	500
24035	20*)	500	32712	1—50	150	38399	37*)	500
24393	1—50	150	32732	13*)	500	38446	21*)	500
24983	1—50	150	33043	1—50	200	38641	39*)	1000
25027	45*)	500	33045	48*)	500	38743	16*)	500
25134	26*)	500	33137	1—50	200	38934	01*)	500
25168	35*)	500	33176	1—50	200	38935	1—50	200
25781	22*)	500	33285	1—50	200	38964	18*)	500
25816	1—50	150	33428	1—50	150	39132	1—50	150
26155	16*)	500	33454	33*)	1000	39312	1—50	200
26672	1—50	150	33524	1—50	200			
26680	40*)	500	33649	1—50	150			

*) Çак серинчи облигацисен ытти 49 номĕрĕсем кашни 150 тенкĕ выљăса илнĕ.

УЙРĂМ ПОДПИСЧИКСЕНЕ, УЧРЕЖДЕНИСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Медгиз, Соцэкгиз, Академия наук, Готхи, Сельхозгиз т. ыт. ИЗДАТĔЛСТВĂСЕН ЖУРНАЛĔСЕНЕ ÇЫРĂНСА ИЛМЕ

1939 ÇУЛШĂН ПОДПИСКĂ ЙЫШĂНАÇÇĔ

Вăл журналсене КОГИЗ тата издатĕлствăсем йарса тăраççĕ. КОГИЗ-ăн районри магазинĕсенче—декабĕрĕн 20-мĕшчен, КОГИЗ-ăн Шупашкарти магазинĕнче тата Бибколлектăрта 1938 çулти декабĕрĕн 23-мĕшчен çырăнса илме пулат.

Кăтартнă срукчен КОГИЗ магазинĕнче çырăнса илме ВАСКĂР!

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

„Сойузкинопрокатăн" Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ

РЕСПУБЛИКĂРИ КИНО-ЕКРАНСЕМ ÇИНЕ

„СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ"

ЙАТЛĂ САСЛĂ, ÇĔНĔ КИНО-ОЧĔРК КĂЛАРНĂ.

Режиççор Б. В. ВЕЙЛАНД. Операторăр Б. А. ТИМКИН.

Кинохроникăн Шупашкарти студийĕ 1938 çулта ÿкерсе кăларнă.

Очĕрк—чăваш халăхĕ Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пынипе, троцкисла-бухаринла ирсĕрсемпе тата буржуалă националиссемпе кĕрешсе хăйĕн телейне, хавасла та ирĕклĕ пурнăçне тунине, Октябĕр революцийĕ хыççăнхи çулсенче социалисăмлă промышленнăç, транспăрт, йалхуçалăхĕ тата култура ÿсиине, хăйĕн нацилĕ кадрсем ÿсse çитĕннине кăтартса парат.

Куйбышĕври гидроузел строителствин çурçĕр-хĕвеланăç инженерла-геодези ОТДЕЛЕНИЙĔ

17, 18, 19 мĕш топографи партийĕсенче ĕçленĕ, ĕçрен тухнă, анчах ĕçукçи тата подпискă тăрăх III-мĕш Пилĕкçуллăх Займĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăм) облигацийĕсене илмен рабочисене пурне те ĕçукçи тата облигацисене пырса илме йе хăйсен адрĕсне пĕлтерме ыйтат. Бухгалтерине пынă чухне ĕçрен тухни çинчен справкă илсе пымала, хăйсен адрĕсне пĕлтернĕ чухне те çав справкăна хурса йамала.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Калыкова, д. № 6/2.

Чăвашсен Педагогикă Институтне икĕ машинисткă КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

ДИРЕКЦИ.

ПУР ГРАЖДĂНСЕНЕ ТЕ пĕлсе тăма

Аш-какай продукцисен пахалăхне лайăхлатас тесе, аш-какайа контроль тăвакан станцине клеймо пустарма пыракан пур граждăнсене те выљăх тирне хатĕрлев организацисене пави çинчен квитанци кăтартма хушаççĕ. Квитанци çук пулсан клеймо пусмаççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Ветеринари управленийĕ.

2—2

Шупашкарти ерех савăтне ОПЫТЛĂ СЧЕТОВОДСЕМПЕ БУХГАЛТĔРСЕМ КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх тÿлеççĕ.

Дирекци.

2—1

„Россна6сбытăн" Чăваш кантурне хăвăрт кирлĕ:

ЕКОНОМИСТ-ПЛАНОВИК ТАТА ТОВАРОВЕД-УЧОТЧИК

2—1

МАГАЗИНА ХУПНĂ ХЫÇÇĂН йулнă канцељари таварĕсене тата култтаварсене ПЫСĂК МАР ХАКПА СУТАÇÇĔ

ЫЙТМАЛА: Шупашкар хули, Союзсен çуртĕ, 1-мĕш пÿлĕм, Туллимар вăтам шкул работникĕсен сойузĕн республикăри комитечĕ.

ИНВАЛИДСЕН Шупашкарти „Чебторгин" артелне ОХРАННИКСЕМ КИРЛĔ

Вăрçă тата ĕç инваличĕсене, виççĕмĕш группări пенсионерсене илеççĕ. Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Ĕç вăхăтĕнче ыйтса пĕлмеле.

АДРĔС: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 20.

Врач канашĕсем

Тăм илни

Хĕллехи сивĕ вăхăтсенче тăм илни час-часах пулат. Пуринчен ытла тăм сăмса вĕçне, хăлхасене, алăсене тата ура пÿрнисене илет. Урăхла каласан, шартлама сивĕ йаланах йун начар, вăйсăр çаврăнакан вырăнсене тивет. Ун пек вырăнсем чĕререн айаккарах тăракан оргăнсенче, ткањсенче пулаççĕ.

Çынна тăм илме пулăшакан сăлтавсем нумай. Çынăн чĕри начар ĕçлет, йуна организăм тăрăх çителĕклĕ çаврăрса йараймаст пулсан, ăна, паллах, тăм час илет. Çавнашкалах, вăй пĕтнĕ ватă çынна та сивĕ часах йарса тытат. Анчах манас пулмаст, хĕллехи кунсенче вăйпитти çамрăксене те тăм час-часах илет. Паллă, ытла сивĕ çанталăкра тăм илесрен нимĕнле çамрăк организăм та çăлăнса йулма пултараймаст. Анчах çапах та, тăвăр тумтир (пуринчен ытла урана тăхăнмали), çан-çурăма тăвра ăшă тытса чарайман çÿхе тумтир тата çын ÿсĕр пулни тăм илме нимрен ытла пулăшаççĕ. Паллă ĕнтĕ, тăвăр тумтир йун çаврăнăшне вăрахлатат, савăнпа вăл тăм илме пулăшат. Çÿхе тумтир организăмри ăшша тулала час кăларса йарат, хăй çумĕнче тытса чараймаст. Ун пек организăма вара сивĕ пит çăмăл тивет. Çавнашкалах, ÿсĕр не ĕçнĕ çынна тăм час илет. Кун пирки халăх хушшинче суйа ĕнентерÿ пур, „хĕрнĕ çынна" тăм илмест тенине такам та илтнĕ пулĕ. Чăн, ĕçнĕ çын сивве сахал туйат, мĕншĕн тесен ĕçкĕ, наркоз пекех, çын сисĕмне, туйăмне чакарат. Ун пек çын хăй ура çынтан ытларах шăннă пулсан та, пуç мими тумсăхланса ларнипе, хăйне мĕн пулнине сахалтарах туйат. Ку тĕлĕшрен пример кăтартма кирлех мар. Ÿсĕр пирки туймасăр шăнса вилекенсем пĕр çын кăна мар ĕнтĕ. Тепĕр йенчен, ÿсĕрлнĕ çынăн тымарĕсем йаланах сарăлаççĕ. Йун тымарĕ сарăлсан çын ăшĕнчи ăшă çанталăка ытларах тухат. Апла пулсан, ун пек çынна часах тăм илет. Çапла вара, сивĕ çанталăкра çул çине ĕçсе тухни тăм илесрен пулăшмаст, пысăк сийен кăна тăват.

Тăм илни виçĕ тĕслĕ пулат. Пĕринчи çăмăл тăм илни. Кун пек чух малтан йун тымарĕсем хĕсĕреннипе, пачăртаннипе ÿт шуралса кайат. Кайран, ун хыççăн, йун тымарĕсен параличĕ пулат (ĕçлеме пăрахаççĕ), вара тăм илнĕ вырăнти ÿт хуралса кайат. Кун пек тăм илни час-часах ахалех, емеллемесĕрех иртме пултарат. Хытăрах тăм илсен иккĕмĕш стади пулат. Кун пек чух тăм илнĕ вырăна шывланса ларнă шатрасем сиксе тухаççĕ. Виççĕмĕш стадире, ытлашши тăм илсен, тăм илнĕ вырăна кайала ĕлĕкхи вырăна çаврăрма çук. Йун тымарĕсем пĕтнипе, клеткăсем вилнипе оргăн çĕрет (гангренă пулат). Ку вара организăмшăн хăруш чир пулат, ун пеккине пуљницăсенче те час сыватаймаççĕ. Тăм илни виççĕмĕш стади пулсан, час-часах тăм илнĕ вырăна (алă-урасене) татма лекет, емел тавраш пулăшмаст.

Тăм илнинчен пулăшакан хăйне ăрасна емел çук. Çавăнпа тăм илнинчен сыхланма пĕлесси тата тăм илнине ÿкерме пĕлни малтанхи вырăнта тăмала. Малта каланисенчен тăм илесрен мĕнле сыхланмали паллă ĕнтĕ. Тăм илни организăма çав тери хăрушлăх пама пултарнине астуса, кашни çынăн, пуринчен ытла вăй чакнă çынсен, унтан сыхланма тăрăшмала. Унтан, çул çинче нихăçан та „ерех ăшши" çине шанма кирлĕ мар. Урă çын сивĕ тивнине ытларах туйат, хăйне ытларах сыхлама тăрăшат. Паллă, çын температури 20 градусран чакнă пулсан, вăл шăнса вилет. Ÿсĕр çын ăна туйаймаст. Çавнашкалах, çул çине йаланах ăшша тулала сахал паракан тумтирсем тăхăнса тухас пулат.

Тăм илсен нихăçан та тăрук ăшă пÿрте кĕрес пулмаст. Ун пек тусан йун тымарĕсен параличĕ пулат, çавăн хыççăн оргăн йе ткањ çĕрет. Тăм илнĕ вырăна йурпа йе сивĕ шывпа ÿкерме тăрăшмала. Тăм илнĕ вырăн çемçелсе çитсен тин ăшă çере кĕме йурат. Тăм илнĕ вырăнта йаланах йун çаврăнăшĕ пăсăлат (венозный застой). Çавăнпа йун çаврăнăшне хăвăртлатма (ăшă пÿрте кĕрсен) тăм илнĕ вырăна йаланах çÿлĕ вырăна туса (çакса, çĕклесе тата ыт.) хумала. Тăм илнĕ вырăна тăруках ăшă (грелкă) хума нихăçан та йурамаст.

Тăм илесрен çул çине пит-куççене çу (хур, сысна çăвĕ, вазелин тата ыт.) сĕрсе тухни чылай пулăшма пултарат.

Вайлă тăм илсен (иккĕмĕшпе виççĕмĕш стадисем) пăсăлнă ÿте микробсем час çыпăçаççĕ. Вара осложненисем пуçланаççĕ. Кун пек тăм илсен вăхăта килте иртермеле мар, часрах пулницăна каймала.

Врач К. Пайраш.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 656 Гор. Чебоксары типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.